К63.5
В43
4-38572

Геннадий Викторов



# Ман килес!

Национальная библиотека ЧР
4-038572

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

Обязат. экз.

К63.5-В43

Геннадий Викторов

# *Ман килес!*

Чебоксары 2004

63.52(235)[Чув]7-2[Мос]
К63.52[Чув]7-2[Мос]

Викторов Г.А.
Я пришел!
Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2004. 127 с.

В книгу вошли материалы-произведения разного жанра /воспоминания, зарисовки, рассказы, переводы, публицистические и исторические статьи/, написанные автором.

Для широкого круга читателей.

Ч-38572
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ПРОВЕРЕНО
2010

© Викторов Г.А., 2004
© Иллюстрации. Викторов Г.А., 2004

# СТУПЕНИ ЖИЗНИ

Геннадий Александрович Викторов родился 2 февраля 1951 года в деревне Анаткас-Марги Чебоксарского района Чувашской АССР.

После Анаткас-Маргинской восьмилетней школы в 1968 году окончил Ишакскую среднюю школу.

С 1968 по 1973 годы учился в Московском экономико-статистическом институте. Инженер-экономист. В 1973 году был призван в ряды Вооруженных Сил СССР. С 1973 по 1979 годы проходил службу на Камчатке на наземном измерительном пункте Главного управления космических средств в должностях инженера-программиста и старшего инженера.

В 1977 году окончил вечерний Университет марксизма-ленинизма при ДОСА г. Елизово Камчатской области (общий факультет).

В 1979 году для прохождения дальнейшей службы был переведен в один из Центров управления космическими аппаратами в Подмосковье.

На должностях научного сотрудника, старшего инженера-испытателя занимался эксплуатацией, испытанием и совершенствованием программных и вычислительных комплексов, предназначенных для управления летающими аппаратами.

Получил в соавторстве 11 авторских свидетельств на изобретения, три из которых нашли применение в войсковой практике. Опубликовал 50 научных работ. Внедрил 110 рационализаторских предложений.

В 1985 г. окончил полный курс Центрального инсти-

тута повышения квалификации руководящих работников и специалистов народного хозяйства в области патентной работы по специальности «Патентоведение».

За свои технические разработки, их внедрение награжден Знаком «Изобретатель СССР», Золотым значком ВДНХ СССР «За успехи в народном хозяйстве СССР», стал лауреатом Научно-технического творчества молодежи и лауреатом премии комсомола Подмосковья в 1988 году.

Офицер Г.Викторов Указами Президиума Верховного Совета СССР от 28 января 1978 года и 28 января 1988 года был награжден юбилейными медалями «60 лет Вооруженным Силам СССР» и «70 лет Вооруженным Силам СССР», а также награжден медалями «За безупречную службу» III и II степеней.

В 2001 г. окончил Московский государственный строительный университет. Инженер по специальности «Промышленное и гражданское строительство». С 1997 года работал гл. инженером, заместителем директора, в настоящее время является генеральным директором малого предприятия, занимающегося ремонтно-строительными работами.

3 апреля 1996 года уволен из рядов Вооруженных Сил.

## ОБЩЕСТВЕННАЯ РАБОТА

Принимает активное участие в общественной жизни чувашской диаспоры в г. Москва.

С 1992 года – член Правления Московского общества Чувашской культуры (МОЧК).

1996 по 1998 гг. – заместитель председателя правления МОЧК.

С 2002 по 2003 гг. – Председатель исполкома московской чувашской национально-культурной автономии (МЧНКА).

С 2003 г. – член Совета МЧНКА.

Первые публикации были сделаны в районной газете «Ленинец» Чебоксарского района Чувашии в 1965 году.

В качестве внештатного корреспондента сотрудничал с редакциями газет «Красный воин» (Московский военный округ), «Чӑвашьен» (Чувашия), журналом «Техника и вооружение» (Министерство обороны СССР). Публиковал свои корреспонденции в газетах «Советская Чувашия», «Хыпар», «Правительственный вестник», «Московская правда» и др.

## НАГРАДЫ Г.А. ВИКТОРОВА

**1962 г.:** Грамота. Награжден за отличную учебу. Анаткас-Маргинская школа.

**1966 г.:** Грамота. Награжден за отличную учебу. Анаткас-Маргинская школа.

**1967 г.:** Грамота. За III-IV места в беге на 1.000 м – 3.10,0. Ишакская средняя школа.

**1974 г.:** Грамота. За I место на дистанции 1.500 м – 4.31.00. 16 июня 1974 . Войсковая часть 14086.

Диплом. За I место в эстафетном беге 800x400x200x100 м. 21 июля 1974 г. Г. Елизово.

**1975 г.:** Грамота. За II место по лыжным гонкам на 10 км – 36.17. 6 марта 1975 г. Войсковая часть 14086.

Грамота. За I место в эстафете в честь 1 мая. 2 мая 1975 г. Елизовский гарнизон Камчатской области.

Грамота. За I место по легкой атлетике в беге на 1.000 м – 3.08. 19 мая 1975 г. Войсковая часть 14086.

Грамота. За I место по легкой атлетике в беге на 5.000 м – 17.23.7. 12 июля 1975 г.

Грамота. За II место по военизированному кроссу на 3 км – 11.22. 2 сентября 1975 г. Войсковая часть 14086.

Грамота. За I место по лыжным гонкам на 5 км – 25.27. 30 декабря 1975 г. Войсковая часть 14086.

**1976 г.:** Грамота. За II место по лыжным гонкам на 10 км – 36.10. 30 января 1976 г. Войсковая часть 14086.

Грамота. За II место по военизированному кроссу на 3 км – 12.30. 30 июня 1976 г. Войсковая часть 14086.

Грамота. За I место по легкой атлетике в беге на 1500 м – 4.26.6. 7 июля 1976 г. Войсковая часть 14086.

Грамота. За активное участие в развитии физической культуры и спорта в Елизовском районе. 2 ноября 1976 г. Председатель спорткомитета Елизовского района.

**1977 г.:** Диплом I степени. За I место по лыжным гонкам на призы газеты «Ленинское знамя» Елизовского района. 15-16 января 1977 г.

Грамота. За хорошую организацию спортивно-массовой работы в подразделении и активное участие в спортивной жизни части. 20 декабря 1977 г. Войсковая часть 14086.

**1978 г.:** Грамота. За участие в марафонском пробеге г. Елизово – г. Петропавловск-Камчатский– 1 ч. 47 мин. 27 мая 1978 г. Камчатский областной совет «Динамо».

**1982 г.:** Грамота. За II место в лыжном кроссе на 5 км. 26 февраля 1982 г. Войсковая часть 32103-Б.

**1983 г.:** Грамота. За высокие результаты в рационализаторской и изобретательской работе. 24 февраля 1983 г. Войсковая часть 08317.

**1985 г.:** Грамота. За активное участие в изобретательской и рационализаторской работе. 28 июня 1985 г. Командир в/ч 32103 генерал-лейтенант Н.Ф.Шлыков.

**1986 г.:** Диплом. Лауреату Московского областного смотра.

**1987 г.:** Диплом. За большую организаторскую работу и активное участие в Центральной выставке-ярмарке научно-технического творчества молодежи 1987 г. Первый заместитель Министра обороны СССР генерал армии П.Лущев. 6 июня 1987 г. Г. Москва.

Грамота. За победу в областном смотре работ изобретателей и рационализаторов Московской области. Председатель Московского областного совета ВОИР А.П.Грязев. 5 ноября 1987 г. Пр. № 19.

**1988 г.:** Грамота. За активное участие в изобретательской и рационализаторской работе. Командир войсковой части 32103 генерал-лейтенант Н.Шлыков. 8 мая 1988 г.

Грамота. За участие в соревнованиях, посвященных годовщине Вооруженных Сил СССР. Спорткомитет в/ч 32103. 23 февраля 1988.

Диплом. Лауреату премии МК ВЛКСМ, МОС НТО и МОС ВОИР в области науки, техники и производства за работу «Автоматизация проектирования систем обработки информации». Секретарь МК ВЛКСМ, Председатель МОС НТО, Председатель МОС ВОИР. 5 ноября 1988 г.

**1989 г.:** Диплом. Лауреату Московского смотра научно-технического творчества молодежи. Председатель оргкомитета. 20 мая 1989 г.

Диплом. Лауреату Всесоюзного смотра научно-технического творчества молодежи. ЦК ВЛКСМ, Госкомитет СССР по науке, технике, Центральный Совет ВОИР.

# АЧАЛĂХ

Эпĕ, Геннадий Александрович Викторов, 1951-мĕш çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Мăн Марка ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Анне – Анастасия Яковлевна Викторова (Полытова), атте – Александр Викторович Викторов. Иккĕшĕ те 1924 çулта çуралнă. 1947 çулта, Лăпкă тинĕс морякĕ Александр отпуска килсен, пĕрлешнĕ. Пирĕн çемьере 5 ача - 3 хĕрача тата 2 арçын ача. Эпĕ çемьере иккĕмĕш. 1948 çулта манăн Лиза аппа çуралнă, 1953 çулта – Николай, 1959 çулта – Лида, 1963 çулта – Галина.

Хама 4 çултан ас тума пуçланă эпĕ. Çывăрса тăраттăм та ирхине – пӳртĕн Турă кĕтессинелле тĕнкĕлтетсе утаттăм. Унта, хăмасенчен туса лартнă тенкел (сак) çинче, пĕр арçын çывăрать. Пуçĕ патнелле утса пыратăп. Пĕчĕк пӳрнесемпе арçыннăн хупăнса ларнă куçĕсенчен тĕксе илме тăрăшатăп.

-Ан çывăр, – тетĕп ăна.

-Çывăрмастăп, çывăрмастăп, - хуравлать вăл. Ку манăн асаттен шăллĕ Тимофей пулнă иккен. Вăл чирлесе ӳксен асатте ăна пурăнма хăйĕн килне илсе аннă.

Аттепе анне ирех килтен ĕçе тухса кайнă. Пĕчĕк ачисемпе вара асатте аппаланнă.

Анне малтанах хăйĕнпе пĕрле ĕçлеме уй-хире Лиза аппана илсе тухма пуçларĕ, кăштахран – мана та. Тырă вырнă вăхăтри хĕвел халĕ те пуçа

пĕçертнĕн туйăнать. Каннă вăхăтра тырă купи хыçне кайса сулхăна пытанаттăмăр. Уçăлма Ункăран илсе килнĕ ăшă шыва ĕçеттĕмĕр. Аслисем тата пысăкрах ачасем çурлапа выратчĕç. Пĕчĕкреххисем вара вырнă тырра пуçтарса çыхма, кĕлтесене пĕр-пĕрин çине йĕркеллĕ купалама вĕренетпĕр.

Çурла – хăрушă ĕç инструменчĕ. Çапах шкула çӳреме пуçличченех нумай ял ачи унпа ĕçлеме хăнăхнă. Ăна куçран çухатма, ăçта та пулин пăрахма юраман - çын асăрхамасăр пусма, такăнса ӳксе аманма пултарнă. Анне çапла вĕрентетчĕ: «Ĕçленĕ вăхăтра çурла – алăра, канса илнĕ вăхăтра – хул пуççи çинче, апат çинĕ вăхăтра ăна кĕлте çине тирсе хуратăн».

Ку ĕнтĕ ĕç хăрушсăрлăхĕн йĕрки-вĕрентĕвĕ пулнă. Çакăн çинчен тепĕр чух манса та кайнă пулмалла – пӳрнесем çинче çурла йĕрĕсем ĕмĕрлĕхех юлчĕç.

Пурнăçăн малтанхи 8 çулĕнче уй-хирти чылай ĕçе тума вĕрентĕм. Анне паян кун та мана шкула çӳреме пуçласанах бригадирсем тӳпе валеçсе пама пуçланине аса илет. Аннене 10 касă çумлама параççĕ пулсан – мана икĕ касă. Пĕтрĕ вара çапла манăн ачалăх. Кунĕн-çĕрĕн – уйхирте. Ĕçрен шкула кайса килме анчах уйрăлнă. Уроксене çĕрле, сĕм тĕттĕм пулса ларсан, анчах хатĕрлеме вăхăт çитнĕ. Килтисем пурте мăшлаттарса çывăраççĕ. Никам та чăрмантармасть – лараттăм çурçĕр иртни пĕр е икĕ сехет çитиччен уроксемпе аппаланса.

5-6 классенче çу каçиччен класра пĕрле вĕреннĕ А.Кузьминпа сысна кĕтĕвĕсене çырмасем, Ункă çыранĕ тăрăх хăваласа çӳрерĕмĕр. Кĕнекесем вуласа ларма вăхăт пулман. Пĕр çул çапла Г.Бичер-Стоу çырнă «Хижина дяди Тома» кĕнекене çăвĕпех вуланăччĕ.

7-мĕш класс пĕтерсен анне кӳршĕри И.Кольцов-

па вӑл мана тракторист пулӑшаканӗ пулса ӗҫлеме хӑнӑхтартӑр тесе калаҫса татӑлчӗ. Паян кун та Иван пиччене тав тӑвас килет. Трактора пӑхма, ӗҫлеме, слесарь-механик ӗҫӗсене тума та вӗрентрӗ вӑл мана. Тепӗр ҫул вара ДТ-20 тракторпа пӗчченех ӗҫлеме пуҫларӑм. Ку вӑл хӑвӑншӑн, хӑвӑн ӗҫӳшӗн яваплӑ пулма вӗренни те пулчӗ. Иван пичче юнашар ҫук чухне хамӑнах кӑткӑс, йывӑр ыйтусем ҫине хурав шыраса тупма лекетчӗ. Ара, тепӗр чух тракторӗ те, косилки те ҫӗмӗрӗлсе каятчӗҫ. Юсаттӑмччӗ вӑй ҫитнӗ таран вӗсене, малалла ӗҫлеме тытӑнаттӑмччӗ вара.

Ачалӑх ҫӑмӑл пулман. Килте тӑраниччен ҫимелли апат-ҫимӗҫ пулманнинчен те тӗлӗнетӗп халӗ. Уй-хирти, колхозри ӗҫсене пӗтермесӗр атте-анне килти пахчана кӗрсе каймастчӗҫ, пахчара нимӗн те лартма ӗлкӗрейместчӗҫ. Ялӗпех ҫавӑн пек пулнӑ: малтан колхоз ӗҫне ту, кайран хӑвӑн ҫинчен шухӑшла. Ку пачах тӗрӗс мар пулнӑ вӗт-ха.

Ачалӑхри чи тутлӑ ҫимӗҫ ялти лавккасене илсе килнӗ хура ҫӑкӑр пулнӑ. Темиҫешер кун кӗтеттӗм лавккана ҫӑкӑр илсе пырасса (килте пӗҫермен - ҫӑнӑх пулман, питӗ инҫене кайса ҫӳремеллеччӗ тырӑ авӑртма). Пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн чашӑка тураса яраттӑм хура ҫӑкӑра, тӑвар сапаттӑм, хӗвел ҫаврӑнӑш ҫӑвӗ яраттӑм та, икӗ алӑпа тытса, чашӑка силлесе пӑтрататтӑм ҫупа ҫӑкӑр татӑкӗсене. Унтан кашӑк илетпӗр те, тухса каятпӑр анкартине симӗс сухан патне. Ҫакӑн пек хатӗрлесе ҫисе пӑхӑр-ха. Иккӗленмесӗрех калатӑп – ана ҫинчен татса илнӗ суханпа ҫӑкӑр пӑтратмӑшӗнчен тутлӑрах апат пулман.

5-мӗш класра чухне шкула кайма урана тӑхӑнмалли тупӑнмарӗ мана валли. Асатте ҫӑтӑр-ҫатӑр ҫӑпата ҫыхса пачӗ. Урамсенче юр ирӗлсе шыв

юхма пуçларĕ тата ун чухне. Асатте вара йывăç татăкĕсенчен çӳллĕ, 5 см хулăмăшлĕ «платформа» туса пачĕ çăпата тĕпне. Çӳрерĕм вара çак çăпатапа шкула çу çитиччченех. Кайран, модăна кĕрсе кайнă «платформăсене» курсан, вĕсене ман асаттех шухăшласа кăларнă тесе те шухăшлаттăм.

Хамăн ывăла, Константина, час-часах эпĕ çăпата тăхăнса, çыхса ларнă сăн ӳкерчĕксене кăтартатăп. «Эпĕ çăпатаран тухнă», - тетĕп. Мĕнех, хам та ун çинчен манса каймасан, пурнăçра тĕрĕсрех пурăнма пулĕ тетĕп мар-и ара?

# МĂН МАРКА ШКУЛĔНЧЕ

Мăн Марка шкулĕнче 1-4-мĕш классенче мана Александра Яковлевна Михайлова вĕрентрĕ. 4-мĕш тата 8-мĕш классене вĕренсе пĕтернĕ хыççăн мана Хисеп грамоти панăччĕ. Шкулта пиллĕк паллăсемпе вĕренекен ача тата тепре пурччĕ – Николай Волков. Шкул çулĕсене эпир унпа пĕр парта хушшинче ларса ирттертĕмĕр. 1960-1966 çулсенче Мăн Марка шкулĕнче вăйлă учительсем ĕçлетчĕç. Анастасия Николаевна Николаева – вырăс чĕлхипе, Алексей Александрович Козлов – ĕç тата историпе, Александр Иванович Васильев – математикăпа, Иннокентий Леонтьевич Леонтьев – физикăпа, Дмитрий Дмитриевич Дмитриев – вырăс чĕлхипе, Екатерина Петровна Петрова – чăваш чĕлхипе, Андрей Михайлович Михайлов историпе, Мария Лаврентьевна Тимофеева ботаникăпа вĕрентрĕç. 5-мĕш класра Алексей Тимофеевич Тимофеев пĕр çул хушши вырăс чĕлхипе вĕрентрĕ. Класс руководителĕ те пулнăччĕ вăл. Алексей Тимофеевич литература кружокĕ йĕркелесе ячĕ. Уроксем хыççăн юлса сăвăсем, калавсем çырма хăнăхма пуçларăмăр. Лайăххисене хамăр кăларнă журналсенче çырса пуçтартăмăр. Журналти кăларăмсене ялти клубра ирттернĕ каçсенче тухса вулаттăмăр, инсценировкăсем лартаттăмăр.

Кăçал, пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче, шкулта пĕрле вĕреннĕ ачасемпе тĕл пултăмăр. Алексей Тимофеевича та тупса хăнана чĕнтĕмĕр. Вăрахчен калаçса, аса илсе лартăмăр.

...Шкулта вĕреннĕ вăхăтра ют çĕршыва курма кайса çÿресси çинчен ĕмĕтленме анчах пултарнă эпир. Пĕррехинче пире Алексей Тимофеевич: «Венгри çĕршывне кайса килетпĕр», – терĕ. Пуçланчĕ вара ĕç – хаçатсенче, журналсенче, справочниксенче çак çĕршыв, унăн хулисем, унта пурăнакан халăхсем çинчен интереслĕ материалсем шыраса тупрăмăр. Çав материалсемпе усă курса, шкулти парта хушшинче ларсах, Венгри çĕршывĕнче мĕн курса çÿрени çинчен çырса кăтартрăмăр. Кайран, клубра пирĕн класс ют çĕршыва кайса килни çинчен каласа-вуласа кăтартнă хыççăн, нумайăшĕ ку чăн-чăн пулнă тесе ĕненнĕччĕ.

Шкул çулĕсенче Шупашкарсăр пуçне урăх ниçта та пулса кураймарăм. Пионерсен «Артек» лагерьне кайса курасси тÿпери уйăх çине вĕçсе çитесси пек пысăк ĕмĕт пулнăччĕ. Каярах, Камчаткăра çар службинче тăнă вăхăтра, кăнтăр еннелле канма путевка панăччĕ. Çитсе куртăмах çапла ун чухне «Артека».

6-мĕш класра эпĕ районти «Ленинец» хаçата пĕрремĕш заметка ярса патăм. Шкул ачисем çуркунне кайăксене мĕнле хатĕрленсе кĕтсе илни çинченччĕ вăл. Те нумай вăхăт çырнă ĕнтĕ ку заметкăна, те кунне кая юлса ирттернĕ – редакцирен килнĕ çыру-хурава халь те астăватăп. «Кайăк кунĕсем ирттерни çинчен эпир уйăх каялла çырса кăлартăмăр. Эсир пĕлтерни каярах юлчĕ, çавăнпа та хаçатра пичетлемерĕмĕр. Малашне те пирĕн пата çырса тăма ыйтатпăр», – тенĕччĕ çав çырура.

Çак вăхăтран вара эпĕ районти хаçата шкулти тата колхозри ĕçсем, ялти пултаруллă ĕçченсем çинчен çырса тăма пуçларăм. Кÿршĕ – Н.Максимов почтальон мана, шкул ачине, урампа чарса тăратсах алă пустарса гонорар паратчĕ: е 92 пус, е 1 тенкĕ ытларах. Кашни пичетленсе тухнă заметка хыççăн журналист пулас ĕмĕт пысăкланатчĕ...

Халĕ вара, мана вĕрентнĕ учительсем ҫинчен ырă сăмах ҫырса пичетлеме пултаратăп пулсан, пĕр шухăш-тивĕҫĕ пурнăҫланнă тесе шухăшлама пултарăп.

А.Козлов – манăн кўршĕ. Кола-тихха урамĕнчи чи вĕҫĕнчи ҫуртра пурăнать унăн ҫемйи. Кăҫал вăл 89 ҫул тултарчĕ. Алексей Александрович маншăн иртнĕ вăрҫăн чăн-чăн геройĕ. Орденсемпе медальсем нумай пулнă пирки анчах мар. Ҫав вăрҫă тамăкĕнчен, чĕрĕ юлса, ҫĕнтерсе тухма пултарнă вĕт-ха вăл.

5-мĕш класра ĕҫ урокĕнче Алексей Александрович пукан ăсталама хушнăччĕ. Икшерĕн пайланмаллаччĕ ку ĕҫе пурнăҫлама. Темиҫе токарь станокĕ пурччĕ мастерскойра. Пукан урисене ҫак станоксем ҫинче касса, якатса тумаллаччĕ. Кампа пĕрле пурнăҫлама пулать-ха ку ĕҫе? Станок умне нихăҫан тăрса курман… Шутларăм вара – станок умĕнче инструмент тытса тăма вăйлă та ҫўллĕ ача кирлĕ. Юра Аверкиева суйласа илтĕм. Вăл класра чи пысăккиччĕ. Эпĕ те ĕҫлесе пăхрăм-ха ĕнтĕ токарь станокĕпе, ҫапах та ытларах ĕҫне Юра пурнăҫларĕ. Пĕр тăватă урокран – чи малтисен шутĕнче – туса хутăмăр ҫак пукана.

Ĕҫ урокĕсенче тĕрлĕ инструментпа, ножовкăпа, рубанокпа, фуганокпа, «четвертушкăпа», лобзикпа ĕҫлеме вĕренни пурнăҫра пĕрре мар кирлĕ пулчĕ тесе ҫирĕплетсех калама пултаратăп. Арҫын ачашăн ҫакă – кашни кун кирлĕ япала е ĕҫ те. Халĕ пăхатăп та – пысăк хуласенче пурăнакан чылай арҫын пăта ҫапас, стена ҫинче шăтăк таврашĕ тăвас ĕҫрен хăраса-шикленсе тăрать. Чăнах та, пире шкулта Алексей Александрович ĕҫ урокĕсенче йывăҫран тĕрлĕ инструментпа усă курса унран кирлĕ япала ăсталама вĕрентни хаклă «тупра» пулчĕ.

15 ҫул каялла, магазинсем пуш-пушах, таварсемсĕр тăрса юлнă вăхăтра, шкулти ĕҫ урокĕсене

ҫӗнӗрен аса илме тиврӗ. Пӗрре ҫапла урамра йӑваланса выртакан ҫӳхе хӑма таткисене пуҫтартӑм, алла ялтан илсе килнӗ фуганока (манӑн атте киле час-часах ялти паллӑ ӑстаҫӑ Н.Павлов тунӑ инструментсене туянса илсе килетчӗ) тытрӑм та икӗ эрне хушшинче кухня валли гарнитур пуҫтартӑм. Якатнӑ хӑмасене, ещӗксене ҫутӑ лакпа сӑрларӑм. Начар мар пулчӗ пулас – паян кун та мӑшӑр ҫак гарнитура улӑштарасшӑн мар.

Физика предмечӗпе интересленме пуҫлани И.Леонтьев (Кипеккассинчен) вӗрентнинчен килет тесе шухӑшлатӑп. Урокра вӑл ыйтусене тема тӑрӑх анчах мар, ытти пирки те уҫса паратчӗ, ҫут ҫанталӑкри тӗрлӗрен пулӑмсем ҫинчен каласа ӑнлантаратчӗ. Унӑн тавра курӑмӗ, тӗнче курӑмӗ питех те пысӑкчӗ. (Шел, ун чухне эпӗ Иннокентий Леонтьевич Мускаври Ломоносов ячӗллӗ университетран вӗренсе тухнине пӗлмен. Пӗлнӗ пулсан, тен, кашни кунах Мускав хули ҫинчен каласа пама ыйтаттӑмччӗ-тӗр). Класри ачасем, лайӑх вӗренекеннисем кӑна мар, «3» паллӑсемпе вӗренекеннисем те, ыйтусем пама тытӑнсан (сӑмахран, Ф.Савельев приемник схемисемпе, фотоэффэкт таврашӗпе кӑсӑкланатчӗ), Иннокентий Леонтьевичӑн куҫӗсем темле шалти илемпе ялкӑшма пуҫлатчӗҫ. Доска умне тухса мелпа схемӑсем ӳкерме тытӑнатчӗ. Урокра, темӑна ӑнлантарнӑ чухне, вӑл пӗтӗм чунӗпе ҫак ӗҫе кӗрсе каятчӗ. Ҫырать, ӳкерет... – шӑлса тасатать. Кам та пулин ӑнланса юлмасан – татах ӳкерет. Пӳрнисем, икӗ алли те мелпа шуралса пӗтетчӗҫ. Шурӑ алӑсемпех кӗсйине кӗрсе кайса, сӑмса тутри кӑларса, ҫамки ҫинчи тар пӗрчисене шӑлса илетчӗ. Час-час тата куҫ ҫинех анса каякан вӑрӑм ҫӳҫ пайӑркисене расческа выранне пилӗк пӳрнипе хыҫалалла ҫавӑрса хуратчӗ. Урокран вара пушмаксенчен пуҫласа пуҫне ҫитичченех шап-шурӑ пулса тухса каятчӗ...

# ИШЕК ШКУЛЁНЧЕ

Ишек шкулёнче эпĕ 1967-1968 çулсенче вĕрентĕм. Пире, Мăн Маркари 8 çул вĕренмелли шкула пĕтерсе килнĕ ачасене, Костин купса çурчĕн иккĕмĕш хутĕнчи пӳлĕмре вырнаçтарнăччĕ. Аялта, пĕрремĕш хутра, интернатчĕ. Инçерен килнĕ ачасем пурăнатчĕç унта. (Халĕ ку çуртра краеведени музейĕ вырнаçнă).

Чăн малтанах хама вĕрентнĕ, ăс-тăн панă учительсен ячĕсене асăнса хăварас тетĕп. Акă вĕсем:

Кудрявцева Галина Степановна – вырăс чĕлхи,
Степанова Галина Максимовна – физика,
Смелов Николай Васильевич – математика,
Фомиряков Геннадий Степанович – физкультура,
Скворцов Сергей Кузьмич – физкультура,
Тельмова Людмила Феоктистовна – чăваш чĕлхи,
Лахитов Николай Кузьмич – географи,
Анисимов Геннадий Александрович – вырăс чĕлхи.

Физика урокĕсем час-часах тĕп шкулти (çурчĕ халиччен çунса кайнă) кабинетра иртетчĕç.

Ишек шкулĕ 160 çул тултарнине халалласа иртернĕ каçра пĕрле вĕренсе тухнă ачасемпе, учительсемпе – Г.Степановапа, Г.Анисимовпа – тĕл пулсан, шкул пурнăçне вăрахчен аса илсе лартăмăр. Кулăшла япаласем, ĕçсем те сиксе тухатчĕç вĕреннĕ вăхăтра.

Çапла, 9-мĕш класра пĕррехинче Галина Максимовна пирĕн класс ачисене физика кабинетне анма каласа янă. Урок теми – «Реактивное

Национальная библиотека
Чувашской
Республики
ч-38572

движение». Учительница сётел çине опыт тумалли приборĕсене хатĕрлесе лартнă. Шкулта тимлесе вĕреннисем ас тумалла – физика кĕнекинче çак приборăн ӳкерчĕкĕ пурччĕ. Çакăнса тăракан кĕпçе вĕçне тӳрĕ кĕтес туса тепĕр резинăллă трубка татăкĕ çирĕплетнĕ. Кĕпçе ăшне янă шыв трубкăран юхса тухса хăйĕн вăйĕпе çакăнса тăракан механизма чалăштарса ямалла. Ку вăл реактивлă вăй тухса кайнипе ĕнтĕ. Пулас опыта ăнлантарса пачĕ кăна Г.Степанова, класс алăкĕ уçăлчĕ те шкул директорĕ – Г.Анисимов кĕрсе тăчĕ. Хул хушшинче тетрадьсем. Куçлăх çийĕн куçĕсемпе шăтарасла пăхса илчĕ класри ачасене. Ун чухне эпир шкул директорĕнчен хăраса тăнă – пирĕншĕн вăл питĕ çирĕп ыйтакан çын – директорччĕ. Унталла, кунталла пăхса илчĕ Геннадий Александрович, хыçалти партăра, манпа юнашар, пушă вырăна курчĕ. Унта пырса ларчĕ вăл. Йăтса килнĕ тетрадьсенчен пĕрне уçрĕ те тĕрĕслеме пуçларĕ. Çак вăхăтра Галина Максимовна пысăк колбăран кĕпçе ăшне шыв яма пуçларĕ. Аялти трубкинчен шăнкăр-шăнкăр шыв юхса


Под знаменем марксизма-ленинизма, под руководством Коммунистической партии – вперед к победе коммунизма
Почетная
ГРАМОТА
Настоящей грамотой награждается
ученик Ишакской средней школы
Викторов Геннадий,
занявший III-IV место
по кроссу на 1000 метров
с результатом 3 м 10 сек
Директор школы
2 сентября 1967 года

тухма тытăнчĕ. Класра шăп – пурте тимлесе сĕтел çине пăхатпăр. Çак вăхăтра пĕр сасă пурте илтмелле: «Чĕç тăвать...», – тени илтĕнчĕ.

Г.Степанован хура куç харшисем ялт! çӳлелле çĕкленчĕç. «Кам каларĕ?..», – терĕ вăл, урокра шăпăртах ларакан ачасем çине тимлĕн пăхса илсе. Никам та шарламасть. Хытă сасăпа тепре те ыйтрĕ. Эпĕ ларнă кĕтеселле çивĕччĕн пăхса илчĕ, – хамăн хăлхасем хĕрелсе кайма пуçланине туйса илтĕм.

– Эпĕ каларăм, – терĕ, кулса ярса, шкул директорĕ.

Галина Максимовна нимĕн те шарламарĕ, приборсене шăкăр-шакăр пуçтарса хучĕ. Урăх темăна ăнлантарма пуçларĕ. Шутланăччĕ вара эпир шкул директорĕ пирĕн пекех харсăрланма пултарать тесе.

Геннадий Александрович паян та, академик пулсан та, шкул вăхăтĕнчи пекех çамрăк чунлă, куçĕсем çунаççĕ, тутисем кулсах çӳреççĕ.

– Эсир мана халĕ те чăрсăр шкул ачи пекех туйăнатăр, – тетĕп ăна.

– Шӳтлемесĕр пурăнма юратмастăп, – терĕ вăл.

9-мĕш класра ман пек пĕчĕк ачасем пĕрре-иккĕ анчахчĕ. Хамăн пĕр дневникре (те шкулта, те военкоматра виçĕннĕ-ха ĕнтĕ) 45 кг пулнă тесе çырнине тупрăм. Ишек шкул стадионĕнче хăвăрт чупакансем çине ăмсанса пăхаттăм. Г.Фомиряков, С.Скворцов ирттернĕ физкультура урокĕсенче тĕрлĕ вăйă (футболла та) выляттăмăр, стадион тăрăх чупаттăмăр. Çапах та спорт енчен вăйсăртарахчĕ эпĕ. Лайăх вĕреннĕрен-тĕр, кун пирки пит кулянса, вăтанса тăни пулман-ха. Учительсем те лайăх вĕренекенсем спорт енчен вăйсăртарах пулни нимех те пĕлтермест тесе шухăшланине туйнă эпир, – вăйлах «хăваламан» пире.

Кӳршĕ ачи, А.Козлов, манран икĕ çул кĕçĕнрех пулсан та, питĕ кĕрнеклĕччĕ, çирĕп ачаччĕ. Алли-


ДОБРОВОЛЬНОЕ СПОРТИВНОЕ ОБЩЕСТВО РСФСР «УРОЖАЙ»

ГРАМОТА

Районный Совет Добровольного Спортивного Общества „Урожай“
награждает:
члена лыжной команды Ишакской средней школы
ВИКТОРОВА ГЕННАДИЯ
занявшего первое место на лыжном кроссе
в честь 50-летия Вооруженных Сил.

Председатель Районного Совета ДСО „Урожай“ /Алексеев/

„17“ февраля 1968 г.

сем вăйлă, мышцисем çирĕп. Спорт енчен вăл мана питĕ пысăк пулăшу пачĕ тесе шухăшлатăп. Хушăран юр çунине, çĕр шăнса ларнине те пăхмастăмăр. Пуçларăмăр Лешăпа мечĕк хăвалама. Çут çанталăк тĕттĕмленсе ларать, – эпир пурпĕр вылятпăр, нимĕн те сисместпĕр. Кашни кун тенĕ пек ишетпĕр юра. Тепĕр чух юр пилĕк таран та пулатчĕ. Йĕп-йĕпе кĕреттĕмĕр пӳрте, пурпĕр кăмăл тулличчĕ.

Çуркунне ирттернĕ кросра вара – ку хамшăн та питĕ тĕлĕнмелле кăтарту пулчĕ – Ю.Аверкиевпа Р.Иванова анчах хăваласа çитеймерĕм. Вĕсем чи вăйлă спортсменсемччĕ – класра та, шкулта та.

Шкулти пĕр-икĕ ăмăрту хыççăн Кӳкеçри ăмăртусене те çӳреме пуçларăм – шкулăн сборнăй командине кĕтĕм. Кӳкеçре иртнĕ район ăмăртăвĕсенче призер пулайман-ха. Çапах та ытларах çĕнтерни мар, хамăн вăй-хала тĕрĕслени, хама шанма тытăнни паха пулчĕ. Çакă мана тĕреклenme, вăйланма, хама хам ĕненме пулăшрĕ.

## БЛАГОДАРНОСТЬ

***Администрация муниципального образовательного учреждения “Ишакская средняя общеобразовательная школа” Чебоксарского района Чувашской Республики выражает благодарность выпускнику школы 1968 года генеральному директору ООО “Атилл” Викторову Геннадию Александровичу за спонсорскую денежную помощь в подготовке и проведении 160-летнего юбилея школы при проведении конкурса среди учащихся на лучшее сочинение по военно-патриотической теме, награждении лучшего по учебе, в спорте, самого активного ученика, самого творческого ученика по всем трем ступеням школы /1-4 кл.; 5-8 кл.; 9-11 кл./ за 2003-2004 учебный год.***

Г.С.СОЛОВЬЕВА,
директор школы
8 мая 2004 года.

## УНИВЕРСИТЕТ

9-мӗш класра вӗреннӗ чухне хаҫатра Шупашкарти И.Н.Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университетӗнче физикӑпа математика факультечӗ уҫӑлни ҫинчен вуласа пӗлтӗм. Ҫак вӑхӑтран ӑҫта вӗренме кӗресси пирки иккӗленме пӑрахрӑм. Пӗр ҫул умра – университета, физмат факультетне.

Шкултан вӗренсе тухнӑ ҫул, ҫуркунне, пӗр шӑматкун университета ҫитрӗм. Унта аслӑ пӗлӳ илес тесе шухӑшлакансем валли математикӑпа лекцисем вулама пуҫланине пӗлтӗм. Чи тӗлӗнмелли кунта – лекци ирттермелли зал (ҫурма ҫаврака, пусма карчӗсемпе ҫӳлелле хӑпарса каякан пӳлӗм) пулчӗ. Итлекеннисем пӗр-пӗрин ӗнсисем ҫине хӑпарса ларнӑн туйӑнать. Преподавателӗ таҫта аялта пӗчӗккӗн кӑна курӑнать.

Те ытла ҫӳле хӑпарса йӗри-тавралла пӑхкаласа ларнипе, те малтанхи кунсенченех ҫӳреме пуҫламаннипе, нимех те ӑнланаймарӑм ҫак лекцисенче. Ун чухне тата автобусӗсем хальхи пек яла ҫитичченех ҫӳреместчӗҫ. Хулана кайса килме Ишек пасарӗ патне автобус ҫине 8 ҫухрӑм ҫуран утаттӑмӑрччӗ. Каҫхине, тӗттӗмленсе лариччен, ҫав ҫулпах каялла кил еннелле чупаттӑмӑрччӗ.

Ҫулсем ҫывӑх, ҫӑмӑл пулман пирки, килти ӗҫсем те ун чухнех пирӗн ҫума ҫирӗппӗн ҫыпӑҫнӑ пирки, лекцисене пӗр тӑватӑ хутчен кайса килсен, пӑрахрӑм вара унта ҫӳреме. Хальхи ӑстӑн пулсан, мӗнле те пулин май тупса ҫӳреттӗмччех ӗнтӗ ҫак курссене – вӗренме кӗме ҫӑмӑлтарах пулнӑ пулӗччӗ кӑна.

Кăçал, акă, университета çитсе курас терĕм, лекцисене çӳренĕ пӳлĕме кĕрсе тăтăм. Пӳлĕм пуш-пушахчĕ. 36 çул каялла хам ăçта ларнине аса илсе пăхса тăтăм вара. Шел, вĕренесси пулмарĕ çак вĕренӳ керменĕнче. Пурнăç урăх çулпа илсе кайрĕ. Кунтах пĕлӳ илнĕ-тĕк, кам пулса ĕçленĕ пулăттăм-ши эпĕ паян: ученăй-физик е ялта вĕрентекен япăхах мар шкул учителĕ?

Шкул пĕтерсен, çурла уйăхĕнче, вĕренме кĕме экзаменсем тытрăм. «4» та, «3» те пурччĕ. Лайăхрах та тытма пулатчĕ пулĕ те ку экзаменсене (хам йăвашрах пулман пулсан), вырăс чĕлхипе хăш-пĕр ыйтусене ăнланса илейменни, «ăнланаймарăм, тепре калăр-ха», - тесе ыйтма вăтанни те пулчĕ кунта.

1960-70-мĕш çулсенче физиксем, ученăйсем çинчен журналсенче нумай çыратчĕç. Ялти учитель А.Козлов «Наука и жизнь», «Техника молодежи» тата ытти журналсене кашни çулах çырăнса илетчĕ. Ун патне кайса пĕрремĕшĕнчен пуçласа юлашки страницăна çитиччен вуласа тухаттăм вĕсене. Хам та физик пулса тĕрлĕрен «открытисем» тума ĕмĕтленеттĕм, тĕлĕксенче те хама синхрофазотронсемпе, ускорительсемпе ĕçлекен пек куратăм.

Пĕррехинче Алексей Александровичпа çакăн çинчен калаçса кайрăмăр та, вăл: «Ку вăл çăмăл ĕç мар, унта сывлăха та çухатма пулать. Радиаци, облучени çинчен ан ман», – терĕ. Эпĕ вара, пурнăç курсах кайман ача, нумай япалана ăнлансах çитеймен çамрăк, «Открытисем тума май пулсан, облучени илме те хатĕр эпĕ», – терĕм.

Экзаменсем тытса пĕтерсен Йышăну комиссине чĕнчĕç. Пĕрремĕш ыйту: «Эсир экзаменсене мĕншĕн çакăн пек паллăсемпе тытрăр?». Кăштах шухăшлама пĕлнĕ е харсăртарах пулнă пулсан, çапла

каланă пулăттăм пулĕ: «Манăн питĕ пысăк ĕмĕт – физик пуласси, открытисем тăвасси». Эпĕ вара: «Немного не повезло», – терĕм. Урама тухсан хама хам питех те хытă вăрçрăм вара çакăн пек шухăшламасăр хуравланăшăн.

«Юрать, сире вĕренме илетпĕр, анчах та çĕнĕ çулччен стипендисĕр вĕренмелле пулать», – терĕç. Эх!!! Савăнса кайрăм, киле мĕнле вĕçтерсе çитнине те астумастăп. Ун чух шухăшлама та пултарайман: йывăр-и е йывăр мар укçасăр, килтен пулăшнипех вĕренесси, килтисен пулăшма май пулать-ши тата?

Эрне те иртмерĕ пулĕ, мана, колхоз уйĕнче ĕçлекенскере, ял хуçалăх советĕнчен хут илсе пырса пачĕç. Унта мана тепĕр кунне Шупашкара Министрсен Совечĕн çуртне пыма каланă. Ку маншăн питĕ кĕтмен çĕртен пулса тухрĕ. Питĕ интересленсе, çав хушăрах пăлханса çитсе тăтăм тепĕр кунне каланă пӳлĕме.

«У нашей республики есть программа подготовки национальных кадров, – терĕ çулланнă арçын. – В этом году мы направляем 4 человека в Ленинград, 4 человека в Казань, 2 – в Москву на обучение в вузах». Мана Мускава экономикăпа статистика институтне вĕренме кайма сĕнчĕç. Эпĕ, Мускав сăмаха илтсен, институт ятне каласа пĕтеричченех килĕшрĕм. Кăштахран пире республикăри статистика управленийĕ вырнаçнă пӳлĕмсене экскурсие илсе кайрĕç. Унта шутлав техникипе паллаштарчĕç. Институтран вĕренсе тухсан çакăнта ĕçлеме пуçлассине каларĕç.

Мускав! Мускав!!! Маншăн, ял ачишĕн, Шупашкарта та темиçе хут çеç пулса курнă çамрăкшăн, питĕ тĕлĕнмелли, савăнмалли, çав хушăрах шухăша ямалли сăмах пулчĕ вăл. Анчах та иккĕленес шухăш пĕртте пулмарĕ ун чухне манăн.

Каятăп! Вĕренме каятăп Мускава!!!

## МУСКАВРА

Мускава тепĕр чăваш ачипе, И.Иванов-па, тухса кайрăмăр. Ачи Шупашкартан, чăвашла пĕр сăмах та пĕлмест иккен. Мускаври Хусан вокзалне çитрĕмĕр те малтанах тĕлĕнсе пăхкаласа тăтăмăр. Хамăрăн ăçта каймаллине пĕлместпĕр-ха. Пĕчĕк тетрадь çине икĕ адрес çырса хунăччĕ: пĕри – институт адресĕ, тепри – ялти кӳршĕсен аякри тăванĕн. Справка паракан бюрон çавракачӳречи умне пырса тăтăмăр. Çав хута хурса: «Как можно доехать?..», - терĕм те, пӳрнепе тĕллесе кăтартрăм ăçта çитмеллине. Икĕ пус анчах тăратчĕ адрес ыйтса илме ун чух. Унтан кирлĕ вырăна кунĕпе чупса шыраса пĕр тенкĕ ытла та пĕтертĕмĕр вара…

Кайрăмăр Иванпа «Большой Саввинский переулок, д.14» шыраса. Çитетпĕр – институт çук вăл вырăнта. Нумай шыраса çӳрерĕмĕр çав таврара, анчах та тупаймарăмăр. Каç еннелле кăна ăнланса илтĕм – ку кӳршĕ тăванĕн адресĕ пулнă иккен. Çĕнĕ справка илсессĕн Мускавăн тепĕр еннелле кайрăмăр, тупрăмăр-тупрăмăрах вара шыраса института. Документсене деканата кĕрсе патăмăр.

Пĕрремĕш кунах Мускавра вырăсла калаçма пĕлменни паллă пулчĕ маншăн. Калаçнине ăнланатăп, анчах та хам калаçма вăтанатăп, тĕрĕс мар каласа хурасран хăратăп. Иванĕ, вырăсла анчах калаçать пулсан та, кунĕпех ман хыççăн çӳрерĕ тĕнкĕлтетсе – ниçта та нимĕн те пырса ыйтмарĕ. Ман пекех йăваш чунлă пулчĕ пулас.

## СТУДЕНТ ПУРНĂÇĔ

1968 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен Мускаври студент пурнăçĕ пуçланчĕ.

Ăста çитмеллине расписани тăрăх хамăн ушкăн номерĕпе шыраса тупрăм – чăн малтанах пирĕн факультет пысăк залра пуçтараннă. Манăн ушкăн «ДМ-102». Ку «Дневная механизация» тенине пĕлтерет иккен. 1-мĕш курс... 2-мĕш ушкăн...

Ялти колхозри уй-хирте ĕçлекен «механизатор» сăмахран тухман пулĕ-ха ку ят. Пĕтĕмĕшле каласан, «Факультет механизированной обработки экономической информации» тени пулать-мĕн.

Хамăн ушкăн пуçтараннă аудиторие вăтанса, хĕрелсе кĕтĕм. Камсемпе вĕренме лекет-ши кунта? Вăй, тăн çитĕ-ши Мускав институтĕнче вĕренме?

Аудиторире 26 ача пуçтаранчĕ. 8 арçын ача. Ыттисем – хĕрачасем. Пурте Мускав ачисем пулчĕç. Ман пек пĕчĕкки тепĕр икĕ хĕрача анчах. Ыттисем пурте пĕвĕ-кĕлеткипе манран çӳллĕрех. Мĕнлерех çепĕç, чарăнмасăр вырăсла калаçма пултараççĕ иккен вĕсем. Мана, чăваш ялĕнчи шкулта вĕренсе пĕлӳ илнĕ ачана, ку Мускав ачисем пурте профессорсем пек туйăнчĕç – мĕн кăна пĕлмеççĕ иккен вĕсем!

Математика урокĕсенче В.Хотомлянский тата А.Савин интеграл илмелли тĕслĕхсене хĕвел çаврăнăш çинĕ пек шĕкĕлтетчĕç. Пирĕн шкулти алгебра кĕнекисенче юлашки страницăра питĕ пĕчĕк шрифтпа «дифференцирование», «интегрирование» ăнлав-

сем мӗне пӗлтернине çур страница çине çырса хунăччӗ. Уроксенче вӗсене нихăçан та пăхса тухман. Кунта вара ушкăнри чылай ача физмат шкулӗсене пӗтернӗ иккен.

Пуçланчӗ вара маншăн вӗренӳ тапхăрӗ. Чи йывăр вăхăт институтра – пӗрремӗш семестр, пӗрремӗш сесси. Эпӗ вӗренме чунтан тăрăшни (пур предметпа та тапаланма лекрӗ) ахальлӗн иртсе каймарӗ. Пӗрремӗш сесси хыççăн виçӗ Мускав ачине институтран кăларса ячӗç. Эпӗ вара пӗр «2» те илмерӗм, – экзаменсене пурне те «3» паллăпа тытрăм. Çапла вара тинех хам Мускаври институтра вӗренме пултарнине ăнланса илтӗм.

Хальхи тăн пулнă пулсан, паллах, вӗренессине те урăхла майлă йӗркеленӗ пулăттăм. Хам ăс-пуç мӗнле ӗçленине те тӳрех ăнланса илеймерӗм малтанах – экзаменсене хатӗрленнӗ чухне материалсене питӗ тимлӗн пăхса тухаттăм. Çапах та «3» паллăсем кăна илеттӗм. Пӗррехинче лекцисене виçӗ хутчен вуласа тухма ӗлкӗртӗм те, экзамена та çăмăллăнах «4» паллăпа тытрăм. Малалла ытти экзаменсене те çавăн пек хатӗрленме тăрăшрăм. Юнашар каласа пулăшакан çын пулман çав, хамăнах йăнăшсем туса тӗрӗс çулсем шыраса тупмаллаччӗ.

Эпӗ вырăсла мӗнле калаçнинчен Мускав ачисем тӗлӗнетчӗç. Е сăмахне тӗрӗс мар калатăн, е пусăма (ударени) урăх çӗре лартатăн – кулакансем те пулчӗç пӗр хушă. «Кулатăр пулсан, сирӗнпе калаçмастăп», – тесе те пăхрăм. Халӗ пулсан, ку чӗлхепе хăвăртрах калаçма вӗренес-ха тесе, никам çине пăхмасăрах калаçнă та калаçнă пулăттăм.

Институтран вӗренсе тухни 31 çул çитрӗ. Çак хушăра информаципе ӗçлемелли технологисем тӗпрен улшăннине пăхса тӗлӗнсе тăратăп. Компьютер, модем, принтер, сканер... – мӗн кăна çук паян! Ун

чухне вара ку япаласенчен нихăшĕ те пулман. Паллах, вĕсем хамăр çĕршыврисем мар, йăлтах ют çĕртен килнĕ техника.

Пире институтра пачах урăх техникăпа ĕçлеме вĕрентнĕ. Ун чухне заводри е колхозри ĕçсем çинчен пуçтарнă информацие (цифрăсене) йăлтах перфокарта (перфорированная карта) çине дырокол пек хатĕрпе шăтăк туса куçарнă. Темиçе пĕр евĕрлĕ карта пуçтарăнсан, тепĕр механизмпа шăтăксен шучĕсене хушса е кăларса шутланă та кирлĕ информацие пуçтарнă. Вĕсенчен статистика отчечĕсем хатĕрленĕ.

Пĕрремĕш ЭВМа (электронлă шутлав машини) эпĕ çар кафедринче вĕренме пуçласан куртăм. «Минск-2» ятлăччĕ вăл. Ăна интегралла схемăсенчен, ЧИПсенчен пуçтарман. Пысăк шкафĕсене уçсан çĕршер, пиншер лампа çуталса ларни курăнатчĕ, ăшă колорифертан тухнă пек тухатчĕ.

Вăл вăхăтра «автоматизированная обработка», «Автоматизированные системы управления» ăнлавсем тухрĕç, информаципе ĕçлес технологи улшăнса пычĕ. Халĕ килте сĕтел çинче ларакан компьютер эпĕ вĕреннĕ, ĕçлеме пуçланă вăхăтри 30-50 пысăк шкафра вырнаçнă ЭВМран пин хут хăватлăрах шутлать, ĕçлет. Вуласа, çырса та илет (сканерпа е тепĕр диск çинчен), кирлĕ евĕрлĕ пичетлесе те парать, Интернета тухса пирĕн çĕршыври кăна мар, ют çĕршывсенчи тĕрлĕ вырăнпа çыхăнма пулăшать. Çапла, тĕлĕнмелле пысăк улшăнусем пулчĕç çак çулсенче информаципе ĕçлес енĕпе...

Кашни çул вĕренме пуçличчен деканата колхозран справка илсе килмеллеччĕ. Ашшĕамăшĕ çулталăкра мĕн чухлĕ укçа ĕçлесе илнине пĕлтерекен хут кирлĕччĕ. Унтан вара çемьере миçе ача пулнине шута илсе кунта вĕренекен студента миçе тенкĕ лекнине шутлатчĕç. 50 тенкĕ лекет пулсан, хăть те мĕнле вĕрен, стипенди памаççĕ. Стипенди илекенсе-

не вара пĕр-пĕр экзамена «2» паллăпа тытсанах çур çуллăх пама пăрахаççĕ. Юрать-ха 5 çул хушшинче пĕр «2» те илсе курмарăм. Стипендие пĕрремĕш курсра пĕр уйăхшăн анчах памарĕç - кирлĕ справкăна вăхăтра илсе пыраймарăм.

Иккĕмĕш курс пуçлансан деканата çак хута илсе килтĕм. Унта манăн атте-анне çулталăкра пин те çĕр «трудодень» ĕçлесе илнине пĕлтернĕччĕ. Деканатра ларакан çамрăк хĕрача ĕç кунĕсене укçа çине мĕнле куçарас тесе ыйтать. Хам та пĕлместĕп. Пĕр ĕç кунне пĕр тенкĕ тесе шутлăр, тетĕп. Килте ун чухне тата тепĕр 4 ача. Хĕрача шутларĕ те – ман çине 13 тенкĕ те тухмарĕ. Колхозра çак вăхăтра пĕр пус укçа та тӳлемен.

– Сире укçасăр вĕренме йывăр пулас, - тет деканатра ĕçлекен хĕрача.

– Паллах, йывăр. Кăштах ĕçлесе илме май тупсан, питех те лайăх пулнă пулĕччĕ, – тетĕп.

Сĕтел хушшинчен çĕкленчĕ те хĕрача: «Айда к генералу», – терĕ.

Ятне те пĕлмен çав хĕрачанне. Алăран тытса, çавăтса кайнă пекех, çар кафедрине илсе кайрĕ. Мана коридорта хăварчĕ, хăй çар кафедрин заведующийĕ патне – А.Васильев генерал-майор патне кĕрсе кайрĕ. Тепĕр 5 минутран тухрĕ те мана генерал патне кĕртсе ячĕ. Сĕтел хушшинче ларакан тĕреклĕ арçын – орден, медаль колодисем кăкăр тулли, хайхи генерал, мана çапла каларĕ: «Вот тут Наташа хлопочет о тебе. Могу принять тебя на кафедру на полставки дежурного стрелка военизированной охраны. Оклад 30 рублей в месяц. Дадим униформу. Согласен?». Пуçра тӳрех çакăн пек шухăшсем мĕлтлетсе илчĕç: «Стипенди 28 тенкĕ, ĕçшĕн 30 тенкĕ пулсан, пурăнатăп-ха эппин...».

– Паллах, килĕшетĕп, – тетĕп.

Çапла палламан-туман Мускав хĕрачи мана

вĕреннĕ вăхăтра питĕ пулăшрĕ. Сесси вăхăтĕнче, экзаменсем пынă чух, аудитори умĕнче куртăм çав хĕрачана – тетрадьсем, кĕнекесем тăрăх экзамена хатĕрленсе ларатчĕ. Ăнлантăм вара: кăнтăрла деканатра ĕçленĕ вăл, каçхине факультетра вĕреннĕ.

Питех те айван пулнă çав эпĕ ун чухне. Пĕр хут та пулин пырса тав сăмахĕ каламарăм çак хĕрачана. Хăть темиçе шăккăлат илсе парасчĕ. Халĕ те ăнланмастăп – те вăтанни пулнă-ши çакă, те пуçпа шухăшламанни...

Г.Волков академик чăвашсем çинчен вĕсем питех те тав тума пĕлекен çынсем тесе çырать. Халĕ шухăшлатăп та, çынна хăвна кирлĕ чух пулăшнăшăн тав тăвасси те ватăлма пуçласан анчах килет пирĕн пуçа, те урăх сăлтава пулаши – халĕ çак хĕрача тупăннă пулсан, паллах, тав тăвăттăмччĕ мĕнле те пулин.

4 çул, вĕренсе тухиччченех, ĕçлерĕм çар кафедринче. Сакăр кунта пĕр дежурство тухатчĕ – талăкĕпех ларатăмччĕ унта. Кăнтăрла студентсем вĕренеççĕ, каçхине ЭВМсем çинче офицерсем тĕрлĕ программăсем çыраççĕ. Çавăнтах аслă курсри студентсем те практикăна çӳретчĕç. Ман çине пăхса Мускав ачисем те ĕç пирки ыйткалама пуçларĕç. Хамăн икĕ юлташ ачине Н.Хозина тата В.Мартынова пулăшрăм ĕçе вырнаçма.

4-мĕш курс пĕтерсен вара çар кафедри енĕпе Тамбоври артиллерипе техника училищинче стажировка пулчĕ пирĕн. Унтан килсен патшалăх экзаменĕ тытрăмăр. Мана лейтенант званине пачĕç. Кафедра заведующийĕ А.Васильев генерал мана çапла каларĕ ун чух: «Институт пĕтерсен хăш-пĕр çамрăка çара чĕнетпĕр. Эсĕ çирĕп дисциплинăллă, хушнине пурнăçлатăн. Сана та çара илсе кайма шутлатпăр», – терĕ.

Эпĕ килĕшрĕм.

## ÇАР ĔÇĔ

Çар службине, Камчаткăна, институт пĕтернĕ виçĕ ача – С.Воробьев, С.Гусаков тата эпĕ – пĕрле тухса кайрăмăр. Çулĕ вăрăм пулчĕ. Пĕр эрнерен кăна Владивостока пуйăспа çитрĕмĕр. Тăватă кун Камчатка çĕрĕ еннелле пăрахут çула тухасса кĕтрĕмĕр. Тата тепĕр 4 кунтан, Лăпкă тинĕсре ăш-чик тухиччен силленнĕ хыççăн, Петропавловск-Камчатский хулин портне антăмăр. Пире чаçе çитме (чаçĕ Елизово хулинчен иртсен, Паратункă ялĕ еннелле вырнаçнă) командир УАЗ автомашина ярса панă иккен.


За нашу Советскую Родину!

ГРАМОТА

Награждается майор ВИКТОРОВ Г.А.

за активное участие в изобретательской и рационализаторской работе.

КОМАНДИР ВОЙСКОВОЙ ЧАСТИ 32103
генерал-лейтенант ШЛЫКОВ

М. П.

28 июня 1985

Икĕ сехетрен чаçе çитсе казармăна пурăнма вырнаçрăмăр. Кунта 40 лейтенант та пурăнать иккен.

Çар Уставĕнче «Воин должен мужественно переносить суровые тяготы службы» тесе çырнăччĕ. Пуçларăмăр Уставра каланă пек пурăнма. Поселокĕнче пĕр столовăй та ĕçлемест. Виçĕ лейтенантăн

пĕр пĕчĕк кипятильник тупăнчĕ. Унпа усă курса чей те вĕрететпĕр, апат та пĕçертĕмĕр пĕр хушă.

Студент вăхăтĕнче пӳлĕмре 8-ăн пурăннăччĕ пĕр çул. Кунта – пĕр пӳлĕмре 40 çамрăк. Çапларах условиччĕ салтаксен казарминче. Унталла-кунталла çĕрĕпех çын утать – кам дежурствăна тăрса каять, кам дежурствăран каялла килет е тата посыльнăй чупса килсе камăр кăшкăрса чĕнсе тухса каять.




Мана тата С.Гусакова 5-мĕш отделти 11-мĕш отделенине инженер-программист пулса ĕçлеме палăртрĕç. Пĕр уйăх М-220 ЭВМпа ĕçлеме вĕрентĕмĕр. Космосра вĕçекен спутниксемпе çыхăну тытакан радио техникипе паллашрăмăр, мĕнле ĕçленине, вĕсем валли ЭВМпа тĕрлĕ траектори расчечĕсем туса, хăш вăхăта хатĕрлесе çитермеллине лайăх тăнласа тăтăмăр. «Баллистика» наукине, спутниксен траекторине шутласа палăртакан программăсене пĕр çул кăна мар çине тăрсах «кăшлама» тиврĕ. Тимлĕ пулмаллаччĕ çав. Ку программăсемпе усă курнă чухне е задача шутламалли условисенче йăнăш ярсан пĕр станци те космосра спутникпа çыхăнăва тухаймастчĕ.

Ирхине 8 сехетре ĕç вырăнне çитетĕн, тепĕр талăкран дежурствăран тухатăн. Çĕр каçиччен кан-


СОЮЗ СОВЕТСКИХ СОЦИАЛИСТИЧЕСКИХ РЕСПУБЛИК

ГОСУДАРСТВЕННЫЙ КОМИТЕТ СССР
ПО ДЕЛАМ ИЗОБРЕТЕНИЙ И ОТКРЫТИЙ

АВТОРСКОЕ СВИДЕТЕЛЬСТВО

№ 1417001

На основании полномочий, предоставленных Правительством СССР, Государственный комитет СССР по делам изобретений и открытий выдал настоящее авторское свидетельство на изобретение:
"Многоканальное устройство приоритета"

Автор (авторы): Викторов Геннадий Александрович, Корцунов Леонид Павлович, Антонов Алексей Борисович и Аношкин Александр Владимирович

Заявитель:

Заявка № 4101916 Приоритет изобретения 5 мая 1986г.

Зарегистрировано в Государственном реестре изобретений СССР

15 апреля 1988г.

Действие авторского свидетельства распространяется на всю территорию Союза ССР.

Председатель Комитета

Начальник отдела

ма, çывăрма юрамасть, майĕ те çукчĕ. Киле çитсе 2 сехет пек кăна канатăн та каллех службăна тухатăн, е наряда лартаççĕ, е чаçри тĕрлĕ мероприятисене чĕнеççĕ. Тепĕр кунне каллех дежурствăна чупатăн. Кунти служба вăхăчĕ маншăн пĕтĕмĕшле 22 çула пынă çар ĕçĕн чи йывăр тапхăрĕ пулчĕ тесех калатăп. Çапах та пире, ЭВМсем çинче ĕçлекенсене, чаçри ытти офицерсем «Белые воротнички» тесе чĕнетчĕç. Ăмсанатчĕç пулас пирĕн ĕçе...

Талăкĕ-талăкĕпе çывăрмасăр ĕçленĕ пулсан та нихăçан та нăйкăшса ларман. Кăшт пушă вăхăт пур – спортзала, тренировкăна. Кашни эрнере, уяв кунĕсенче чаçри вунă отдел спортсменĕсем пĕр-пĕринпе стадионта е йĕлтĕр трасси çинче, е ытти енĕпе ăмăртатчĕç. Темиçе çул хушши чаçре 800 тата 1500 метрлă дистанцисенче манран хăвăртрах чупаканни пулмарĕ. Камчатка облаçĕнчи ăмăртусене хутшăнса чаçри спортсменсемпе «Шведская эстафета» дисциплинăра пĕрремĕш вырăн та йышăнтăмăр. Районти ăмăртусем те пирĕнсĕр иртмен.

Икĕ çул вĕçленсе пынă май, часть командирĕ Н.Работягов хăйĕн патне чĕнчĕ, чаçре службăра юлма сĕнчĕ. Эпĕ каллех килĕшрĕм. Тепĕр виçĕ çул çурă иртсен мана – капитана – Мускав çывăхĕнчи ЦУПа (Центр управления полетами) куçарчĕç.

Камчаткăри вăхăта илсен, манăн служба карточкине ун чух шăп та лăп 80 тав хучĕ çырса хунă пулнă. Тĕрлĕ командирсем (отделени начальникĕсенчен пуçласа ГУКОС начальникĕ таран) манăн çар ĕçне хак панă. Кунти тав сăмахĕсем – спортра çитĕнӳсем тунăшĕн, спутниксемпе ракетăсене ăнăçлă вĕçтерсе янă ĕçсене хутшăннăшĕн т. ыт. те. Нумай офицер хăйĕн пĕтĕм служба тапхăрĕнче (25-30 çул хушшинче) çакăн чухлĕ поощрени илеймен...

Мускав çывăхне куçсан, çар ĕçĕнче иккĕмĕш тапхăр пуçланчĕ тесе шухăшлатăп. Чылай анлăрах, интереслĕрех те пулчĕ вăл. Ĕç те чылай кăсăкрах. Камчаткăра пĕр пунктра ĕçлекен радиотехника хатĕрĕсене тĕрĕс ĕçлеттермелле пулнă пулсан, кунта – 30 ытла пункт. ЭВМ, программăсем йăнăш шутласа парсан, кирлĕ хутсене вăхăтра хатĕрлесе çитерейместен – космоспа çыхăну пулмасть, спутник вĕçсе иртсе каять, каялла çаврăнаймасть вăл. Унта пуçтарăннă информаци çухалма та, кая юлма та пултарать.

Спутниксемпе çыхăну тытса тăрас ĕçе йăлтах ЭВМа шанса пама пуçларĕç кунта. Çав ĕçе эпĕ те хутшăнма пуçларăм. ЭВМ валли тĕрлĕрен программăсем çыртăм. Машинăри шутлакан устройствăсене лайăхлатма тăрăшрăмăр. Вĕсенчен çиччĕшĕ – «Устройство преобразования информа-


СОЮЗ СОВЕТСКИХ СОЦИАЛИСТИЧЕСКИХ РЕСПУБЛИК
ГОСУДАРСТВЕННЫЙ КОМИТЕТ ПО ИЗОБРЕТЕНИЯМ И ОТКРЫТИЯМ
ПРИ ГОСУДАРСТВЕННОМ КОМИТЕТЕ СССР ПО НАУКЕ И ТЕХНИКЕ
(ГОСКОМИЗОБРЕТЕНИЙ)

АВТОРСКОЕ СВИДЕТЕЛЬСТВО

№ 1686444

На основании полномочий, предоставленных Правительством СССР, Госкомизобретений выдал настоящее авторское свидетельство на изобретение:
"Многоканальное устройство приоритета"

Автор (авторы): Викторов Геннадий Александрович и другие, указанные в описании

Заявитель:

Заявка № 4722462 Приоритет изобретения 24 мая 1989г.

Зарегистрировано в Государственном реестре изобретений СССР

22 июня 1991г.

Действие авторского свидетельства распространяется на всю территорию Союза ССР.

Председатель Комитета

Начальник отдела

ции», «Устройство для записи с самоконтролем», «Арифметико-логическое устройство», «Многоканальное устройство приоритета» (4) изобретени шайне çитрĕç.

Спутниксемпе ĕçлеме çĕр-çĕр специалист кирлĕ: операторсем, техниксем, инженерсем. Пурне те кĕске вăхăтра вĕрентсе хатĕрлес пулатчĕ. Темиçе тренажер та шутласа кăлартăмăр çак ĕçе пурнăçлама. Вĕсене «Государственный комитет по делам изобретений и открытий» ятлă учреждени тĕплĕ пăхса тухрĕ. Çĕнĕ ĕçсем, кун пекки тĕнчипе те çук тесе автор свидетельствине те пачĕç мана. Вĕсен шучĕ 11-е те çитрĕ. Виçĕ çĕнĕ ĕçĕпе хамăр чаçре анлăн усă куртăмăр. Пĕчĕкрех ĕçсем – рационализаторла сĕнӳсем – 100 ытла та пулчĕç.

Çар ĕçне 1996 çулта вĕçлерĕм. Малтанхи çулсенче, çамрăкрах чухне, çар ĕçне юлмалла-ши, унпа çыхăнмалла-ши тесе чылай шухăшланăччĕ. Кайран иккĕленме пăрахрăм, çар ĕçне кăмăлласах кӳлĕнтĕм. Халĕ, тивĕçлĕ канăва тухсан, çар службине манăн çулах, манăн тивĕçех пулнă тесе шухăшлатăп.

Паян кун та хаçатсенче çара лекнĕ çын наука, творчество енĕпе аталанма пăрахать тесе çыраççĕ. Манăн 22 çула тăсăлнă çар пурнăçĕ çакна хирĕçлет. Юлташсенчен нумайăшĕ – наука кандидачĕсем, докторсем. Хам та, çине тăнă пулсан, Санкт-Петербургри А.Ф.Можайский ячĕллĕ академинче диссертаци хӳтĕлеттĕмччĕ. Пурнăçри çитĕнӳсем пурте тенĕ пекех хăв тăрăшнинчен, çĕр çывăрмасăр ĕçленинчен килнине кун-çул сукмакĕ çинче пĕрре мар курса ĕнентĕм.

## НОВАЯ СТЕЗЯ

После увольнения из Вооруженных Сил встал вопрос трудоустройства. Казалось – есть выбор. Можно идти в том направлении, чему учили в институте, а можно переучиться на современные компьютеры и работать в качестве инженера или программиста.

Громоздкие, собранные на старой элементной базе ЭВМ, на которых я работал перед увольнением, для будущего трудоустройства давали очень мало. Поэтому, чтобы и дальше связывать жизнь с этой техникой, требовалась переподготовка. Но особого желания трудиться в этой же области я у себя не обнаружил. Видимо, за годы службы от нее устал.

Решил вспомнить институтские специальности - бухгалтер, экономист... Начал обзванивать и обходить те организации в Москве и Подмосковье, где требовались данные специалисты. Они нужны были во многих местах. Однако мой пыл был быстро охлажден. В каждой фирме после 2-3 вопросов можно было услышать: “Извините, вы нам не подходите”.

А вопросы были простые, типа: “Какой у вас стаж работы по специальности?”, “Сколько вам лет?”. Везде требовались люди молодые и с опытом работы.

Так, не найдя ничего подходящего, вынужден был трудоустроиться в одну из охранных фирм,

коих в то время развелось немало. Режим работы был благоприятный – сутки дежурства и 2-3 сутки отдыха. Платили неплохо и можно было жить не напрягаясь. Однако не усидел. Со своим товарищем по службе на Камчатке А.Ковалевым начали ремонтировать в Москве квартиры. Через некоторое время ушел на стройку – в небольшой фирме работал главным инженером, заместителем директора.

Со временем появилась уверенность, что можно организовать и свою фирму. Вскоре такая фирма была создана и начала выполнять ремонтные работы на фасадах жилых домов в Подмосковье.

Сын в этом году заканчивает Московский государственный технический университет им. Баумана по специальности проектировщика робототехнических систем. Вряд ли он будет строителем как дед и отец. Кто знает... У него вся жизнь еще впереди, хотя я и мой отец также не сразу стали строителями.

# СЫНЫ ОТЕЧЕСТВА

О том, что в Москве есть товарищество военнослужащих, выходцев из Чувашии, многие уже слышали и знают. Называется оно "Сыны Отечества" и базируется в Военно-инженерном университете. Ежегодные встречи наших земляков в течение последних четырех лет проходят в стенах именно этого учебного заведения. Здесь же обучается десяток курсантов и преподают несколько наших офицеров, в том числе – профессор одной из кафедр полковник И.Николаев. Он и был одним из главных организаторов поездки группы военнослужащих в г. Чебоксары в начале сентября 2003 года.

Военный десант из Москвы на территорию Чувашской Республики высадился 4 сентября ближе к вечеру. В составе делегации – генералы, адмиралы, офицеры, курсанты (50 человек). Среди них – генерал-лейтенант А.Вертухин, главный военный прокурор Московского военного округа, генерал-майоры в отставке М.Шмелев, П.Ермолаев и др. Было много преподавателей из высших военных учебных заведений: полковник В.Шашкаров – преподаватель кафедры военного права Военного университета, полковник П.Иванов – профессор Академии управления МВД РФ, полковник А.Назаров – зав. кафедрой Военного университета и др. Центральный аппарат МО РФ представляли полковники В.Скворцов, В.Федоров, В.Теллин, В.Ильин, подполковники А.Матвеев, А.Крылов и др.

Были и медики – офтальмолог полковник Н.Сольнов. Все они прошли большой жизненный и военный путь, поэтому в ходе встреч с молодежью республики каждому из них было о чем рассказать.

Идея поездки для проведения военно-патриотической работы среди молодежи вызревала долго. Она стала реальной тогда, когда руководители МВД республики генерал-майор В.Антонов, полковник В.Яковлев увидели положительное начало в этом мероприятии и приложили немало усилий для ее подготовки. Следует отметить, что такой четкой организации и проведения всех мероприятий давно не приходились видеть.

На второй день, после возложения венков и посещения музея В.И.Чапаева, все офицеры были распределены по школам и учебным заведениям г. Чебоксары. Мне, вместе с генералом М.Шмелевым, подполковником Ю.Едривановым довелось выступить перед студентами в Чувашском госпедуниверситете. В конце своего рассказа об армии, о жизненном пути я спросил о том, есть ли кто-нибудь из присутствующих, кто бы посвятил жизнь армии. С десяток рук поднялось вверх. Казалось, в зале собрались люди, уже определившие свой жизненный путь. Однако, оказалось, у них сохранился интерес и к ратному труду.

На следующий день мы все разъехались по районным школам. Меня пригласили в п. Кугеси. Запомнилась беседа в школе-лицее. После рассказа о цели нашей поездки, о современной армии, о своем выборе в жизни поступило много вопросов. Было видно, что многие молодые люди хотят учиться дальше. Меня поразило то, что две выпускницы-отличницы, как и их старшие братья, очень

хотят получить образование в военном учебном заведении, служить Родине. На следующий день они с родителями подъехали к месту нашего сбора и я познакомил их с преподавателями соответствующих учебных заведений. Как сложится судьба этих девушек – не знаю. Но, если уж в армию стремятся отличники и отличницы, у нашей армии хорошее будущее!

В ходе подготовки к этой поездке неоднократно приходилось спрашивать друг у друга: "С какой целью едем в родную Чувашию? Кого едем агитировать? Сможем ли помочь желающим поступить учиться?" и т.д. Каждый из нас, как правило, самостоятельно, иногда вслепую, пробивался по сложным лабиринтам судьбы и достигал в жизни своей цели. В данном случае мы были уверены в том, что у нас сейчас есть возможность подсказать, направить молодых ребят в нужную для государства и важную для самого молодого человека сферу деятельности. Многое уже делается. В учебные заведения, где работают наши офицеры, планово и непланово идут поступать молодые люди из Чувашии.

В ходе поездки эти слова о желании помочь звучали неоднократно. Может, мы еще и не знаем, где, как и чем помочь – но эта позиция громогласно, во всеуслышание было заявлено с трибун, по радио и на телевидении. Мне кажется, такое заявление о помощи молодежи, друг другу от большого количества людей в чувашской среде прозвучало впервые.

Известно, что чуваши, в отличие от других национальностей (например, евреев или же представителей закавказских народов) бывают скупы в оказании помощи друг другу. В этом мне самому,

будучи заместителем председателя правления Московского городского общества чувашской культуры, приходилось неоднократно убеждаться. Бывшие в те времена первые лица Чувашской Республики (они многие теперь в Москве) посещали наши мероприятия. Когда же мы обращались к ним с просьбой помочь обществу: нужны были помещения для встреч, библиотеки (собранные еще В.Пряниковым книги пылились долгое время в тюках и т.д.), "большие" люди выслушивали нас внимательно, обещали помочь. Но после неизменно приходилось слышать: "Не получается" и т.п. Видно было, что человек даже не пытается что-то сделать.

Хочется спросить: "Если не можешь, то зачем обещаешь?". Видимо, эта черта – бахвалятся возможностями и ничего не делать – долго еще будет в сознании наших некоторых земляков. Надежда на более молодых. Уже сейчас могу с уверенностью сказать, что подобная психология (когда земляк земляка старается не замечать) постепенно меняется. И это происходит на моих глазах.

К примеру, в течение нескольких лет депутат Госдумы РФ А.Аксаков всеми силами помогает национально-культурной автономии чувашей: реально – не словами, а делом. Несмотря на занятость, он посещает почти все мероприятия земляков и принимает активное участие в них. Это, пожалуй, единственный случай подобного доброго человеческого отношения к выходцам из своей республики. Может, и мы, люди военные, глядя на него, научились теперь при встрече, не пряча друг от друга глаза, говорить: "Ну, здравствуй, хамăр ял! Какие трудности?". И это постепенно реализовывается – старшие по званию хлопочут о более

молодых, поддерживают их в службе и в жизни.

Поездка "Сынов Отечества" в Чувашию также была не случайной. Это – результат изменения психологии отношений между чувашами. Люди (пусть и в военной форме) объявили всем: "Нужно жить, поддерживая и помогая друг другу!". Мы, проживающие ныне в Москве и Подмосковье, готовы и хотели бы так жить. А вы готовы жить в согласии с собой и со всем миром? Уверен, да!

## АТТЕ-АННЕ ТĂВАНĔСЕНЕ ШЫРАНИ

Кăçал, пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче, Мускавран Шупашкара пуйăспа ларса тухрăм. Эрне хушши нӳрĕ кунсем тăчĕç Мускавра, лăш-лăш çумăр, йĕпе юр çукаларĕ. Хĕвел те курăнсах каймарĕ.

Çула тухас умĕн виçĕ хутчен те шăнкăравласа илтĕм пĕрле вĕреннĕ ачасем патне. 38-мĕш çул кайрĕ Мăн Марка шкулĕнчен вĕренсе тухни – çак кунсенче тĕл пулма калаçса татăлтăмăр.

Канашран иртсен тул çутăлма пуçларĕ. Уйхирте çĕнĕ улшăнусем пулассине кĕтекен шăплăх тăрать. Юпа, йывăç, чул муклашки, units тислĕк купи таврашĕнче хура çĕр курăнма пуçланă. Уйри юр вырăнĕ-вырăнĕпе тĕксĕмленнĕ. Канма пĕлмесĕр ĕçлекен чăваш арçыннин çурĕмĕнчи пир кĕпе пек туйăнса кайрĕ çуркунне еннелле туртăннă уй-хир. Нӳрĕленнĕ, шарлаттарса тар юхнă пирки речĕречĕпе хура йĕрсем тухнă. Шупашкара çитнин тĕп сăлтавĕ пирки те шухăшлатăп – тăван йăхтымар йĕрĕсене шыраса пăхасшăн эпĕ.

Тунтикун ирех Чăваш Республикин Тĕп патшалăх архивне çитсе тăтăм. Вулав залĕн алăкĕ çинче шăпах директор приказĕ çакăнса тăрать. Нумай çын хăйĕн йăх-несĕлне тупас тесе шырав ĕçĕ пуçланă пирки тата метрика, ревизи кĕнекисем япăх упранса юлнă пирки ку кĕнекесене архивран алла вулама памалла маррине пĕлтерсе çырнă унта. Мĕн тăвас? Кайрăм пуçлăхсем патне.

-Ятарласа инçетрен килтĕм,.. – тесе калаçса

ларсан кăна манăн ыйту-хут çине директор килĕшсе алă пусса пачĕ. «В виде исключения», - терĕ хĕрарăм-директор.

Чăн малтанах асаттене шырама пуçларăм. Темиçе хулăм том пырса выртрĕ ман сĕтел çине. Пирĕн асатте Виктор Николаевич Николаев хăçан çуралнин тĕрĕс кунне пĕлмен эпир, ниçта та упранса юлман документсем, хучĕсем паян кун та çук килте.

«Метрические книги о родившихся, бракосочетавшихся и умерших за 1883-1887 гг. в с. Ишаки Козьмодемъянского уезда Казанской губернии - фонд 557, опись 4, дело 36» ятлă хулăм тома алла илтĕм. Кĕнеке ячĕсене кĕскетмесĕр çыратăп – хăйĕн тăванĕсене шыраса тупас тесе шухăшлакан çынсем татах та пулĕç. Тен, кăштах çăмăллăх пулĕ вĕсене валли.

Хам та çак ĕçе кая юлса пуçланă çав. Тăван кам пулнине, йăх-тымар историне тĕпчемен, пĕлмен халăхăн малашлăхĕ çук тесе каланă тет çав пĕр аслă çын. Пирĕн Чăваш Енре 1.735 ял тесе çырнă пĕр справочникре. Ман шутпа, нумаях та вăхăт иртмĕ, кашни ял историйĕ уйрăммăн çырăнса тата пичетленсе тухĕ. Ун чухне эпир, чăвашсем, пĕтместпĕр. Çапла мар-и-ха?

Мускава çитсен юлташсене – чăвашсене – каласа патăм та шухăшланă ĕçсем çинчен, вĕсен те куçĕсем çунма пуçланине куртăм. Канаш районĕнчи Уçырма каччи Миша Петров: «Ман аттен тăван ял çинчен çырнă ал çырăвĕ килтех выртать», - терĕ. Халĕ вăл ăна пичетлесе кăларасшăн иккен. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Утаркасси ял историйĕпе ĕçлеме шухăшлакан çын та тупăнчĕ...

Çуралнисен кĕнекин страницисене васкамасăр уçса пыратăп. Акă – ВИКТОРЪ ят курăнса кайрĕ.

Вуласа тухрӑм ҫырнине – ман асаттех пулчӗ ку ҫын. Ҫапла ҫырса пынӑ унта: Ҫулӗ – 1887 ҫ. Ҫуралнӑ кунӗ – 15 сентябрь, тӗне кӗртнӗ кунӗ – 19 сентябрь, ашшӗ, амӑшӗ – Козьмодемъянского уезда деревни Марковой Анаткасовъ крестьянинъ Николай Егоров и законная жена его Матрена Николаева, оба православного вероисповедания. Хутне кам ҫырнине палӑртнӑ: «Иерей Александр Кречетников, псаломщик Петр Сергеев. Восприемник (хресна ашшӗ) – запасной рядовой солдат той же деревни Лука Алексеев. Таинство крещения – иерей А.Кречетников».

Тепӗр кӗнекинче асаттен шӑллӗне шыраса тупрӑм. Тимофей 1892 ҫулта январӗн 5-мӗшӗнче ҫуралнӑ пулнӑ. Эпир ӑна асаттен пиччӗшӗ пулнӑ тесе шутланӑ.

Асаттепе унӑн мӑшӑрӗн Анна Романован тӑватӑ арҫын ача ҫуралнӑ – Афанасий (29.09.1911), Николай (05.12.1912), Михаил (1919), Александр (1924) – манӑн атте. Михаилпа Александрӑн ҫуралнӑ тӗрӗс кунӗсене тупасси пулмасть – совет влаҫӗшӗн ку ӗҫ кирлӗ япала шутланман.

Ялта пӗр вӑхӑтра, паспортсем тума пуҫласан, атте хӑй тата анне ҫурални ҫинчен мӗнле те пулин хут тупас тесе нумай чупрӗ. Тупаймарӗ. Анне те, атте те ҫуралнӑ кунӗсене паспортра ҫырса панипе палӑртса пурӑнчӗҫ.

Кӑҫал ҫӗнӗ ҫул ҫитсен, январӗн 2-мӗшӗнче, анне Мускавра хӑйӗн ачисемпе тата мӑнукӗсемпе пуҫтарӑнса 80 ҫул тултарнине палӑртрӗ. Паян кун та вӑл: «Мана анне кӗркунне ҫуратнӑ», – тесе калать.

Аннене пӗчӗк ача чухнех аппӑшӗ ҫапла каласа панӑ. Якку Иванчӑ (аннен ашшӗ) ҫемьере ывӑл ҫураласса кӗтнӗ. Вӑл вӑхӑтра арҫын ачасене кӑна ҫӗр валеҫсе панӑ. Прасковья Платоновна 4-мӗш

хĕрачана (Настиҫа) ҫуратса илсе килсен кĕҫех ҫанталăк сивĕтсе пăрахнă. Якку Иванчă каланă пулать арăмне: «Ку ачана тухса ларт валашкапа урама», – тесе. Те шўтлесе каланă ашшĕ ҫавна, те ҫук, паян кун та аса илет анне аппăшĕ каласа панине.

Мăн Марки ҫыннисем ҫинчен ҫырнă мĕнле те пулин хут тупас тесе районти архива ҫитсен вара мана ҫапла каларĕҫ:

-1918-мĕш ҫултан пуҫласа 1950 ҫулччен пирĕн нимĕнле документсем те ҫук.

-Мĕншĕн-ха?

-Чăн малтанах сельсоветсене виҫĕ уйăхлăха, тепĕртакран ҫулталăклăха суйланă. Унта лекнĕ ҫынсем нумайăшĕ вулама та, ҫырма та пĕлмен, – терĕҫ. Ҫавăнпа та ĕнтĕ хучĕсене ҫырса та пыраймаи, пуҫтараймаи та.

Асаттепе асаннен ачисем тăваттăшĕ те Аслă тĕнче вăрҫинче ҫапăҫнă. Виҫҫĕшĕ – Афанасий, Николай, Михаил – тăван ҫĕршыва хўтĕлесе вăрҫă хирĕнче пуҫне хунă, Александр – Лăпкă тинĕс морякĕ – киле таврăннă.

Асаттепе асанне ачисем, ытти тăвансем ҫинчен кăшт та пулин ҫырса кăтартасси малалла пулĕ-ха.

Метрика кĕнекинче, сăмах май, кашни ҫул миҫе ҫын ҫурални, вилни, миҫе ҫула ҫитсен, мĕншĕн вилнине те ҫырнă. Хăш-пĕр цифрăсем интереслĕ пек туйăнчĕҫ.

Акă, 1891 ҫула илес пулсан, Козьмодемъянск уесĕнче (тăвата Марки те унта кĕрет) – 207 ҫын вилнĕ (арҫынсем – 101, хĕрарăмсем – 106), ҫуралакансем – 290 ҫын пулнă (арҫынсем – 143, хĕрарăмсем – 147). Пĕр ҫул хушшинче 83 ҫын хутшăннă.

Паян кун хаҫатсенче: «Раҫҫейре халăх хутшăнма пăрахнă, вилекеннисен шучĕ ҫуралаканнисен шучĕ

пе танлашнӑ», – тесе ҫыраҫҫӗ. Мӗнле ӑнланмалла ҫакна?

Цифрӑсене тимлесе пӑхсан ҫакӑ та курӑнать. Малтанхи ҫулсенче 65 ача вилнӗ (ҫуралнисен 32 процентчӗ пулать) – питӗ нумай. Нумайӑшӗн сӑлтавӗ – «горячка». Ҫакӑ вӗрӗлни, пӗҫертсе пӑрахни пулать ӗнтӗ. Чӑн та, вӑл вӑхӑтра медицина пулӑшӑвӗ пулсах кайман тесе шухӑшлатӑп.

# АТТЕ ТĂВАНĔСЕНЕ ПĂХСА ТУХНИ

Николай Егоровпа Матрена Николаева – ман асаттен ашшĕпе амăшĕ. Вĕсен тăватă ача пулнă – Дарья, Ольга, Тимофей, Виктор (ман асатте).

1. Николаева Дарья Николаевна – Тăрăн ялне качча тухнă. Çамрăклах вилнĕ. Ачисем пулман.

2. Николаева Ольга Николаевна. Ачисем Саша, Гаврила, Степан, Иустиния (Уçтен) пулнă. Степанĕ вăрçăра вилнĕ.

3. Николаев Тимофей Николаевич (05.01.1892 ç.).Ултă ача çитĕнтернĕ (Нина, Манефа, Зина, Маня, Геронтий, Лидор).

4. Николаев Виктор Николаевич (15.09.1887 ç.). Асатте хăйĕн мăшăрĕпе – асаннепе Романова Анна Романовнăпа – тăватă арçын ача пăхса ÿстернĕ: Афанасий (29.09.1911 ç.), Николай (05.12.1912 ç.), Михаил (1919 ç.), Александр (25.05.1924 ç.).

Тимофей пичче хĕрĕн, Нина акин, Санька ятлă ывăлĕ халĕ Шупашкарта пурăнать, ялта пÿрт лартнă. Пĕр ывăлпа пĕр хĕр çитĕнтернĕ.

Манефа Ырашпулăхне качча кайнă, пĕр ывăл ача (Валерка) çитĕнтернĕ. Халĕ Валерка Шаров пирĕн ялта пурăнать.

Маня ют района качча кайнă, виçĕ ача çуратса çитĕнтернĕ.

Геронти ялта пурăннă, шофер пулса ĕçленĕ. Хура Çырма хĕрне Маруçа качча илнĕ. Пĕр хĕрпе

пĕр ывăл çитĕнтернĕ. Надя хĕрĕ пĕр хушă Ишекри сбербанкра ĕçленĕ.

Лидор çитĕнсен тепĕр яла тухса кайнă.

Зина икĕ ывăл – Вовăпа Юрăна – çитĕнтернĕ. Хăй чирлесе вилнĕ.

Тимоххи пиччене арăмĕ судпа уйăрса кăларса янă. Вăл вара ампара пурăнма куçнă. Кайран, ампарне колхоза тырăсем упрама парсан, Тимохха пичче Лантăш кŭлли патĕнчи кролик фермин çуртне куçнă, çавăнта ĕçлесе, кроликсене пăхса пурăннă. Чирлесе ўксен ман асатте ăна хăйĕн çуртне илсе килнĕ. «Хам шăллăма çын патĕнче усрамастăп», – тенĕ.

Асатте Виктор Николаев 1914-мĕш çулта империализм вăрçине хутшăннă. Австри-Венгри фронтĕнче тыткăна лекнĕ. Будапешт хули патĕнче, пĕр пуян улпут килĕнче, виçĕ çул тарçăра ĕçленĕ. 1917-мĕш çулта киле таврăннă.

Асанне – Романова Анна Романовна. Унăн ашшĕ Роман пулнă. Вĕсен икĕ хĕрпе пĕр ывăл ўснĕ. Тепĕр хĕрĕ Пархикассине качча тухнă. Вĕсен Нина хĕрĕ çитĕннĕ. Василий ятлă ывăлĕн виçĕ ывăл пулнă. Виççĕшне те вăрçă «хуранĕ» çунтарса янă.

# АСАТТЕПЕ АСАННЕН АЧИСЕМ

1. Афанасий (29.09.1911 ç.). Ялта ял хуçалăх советĕнче ĕçленĕ. Лазарь Павлович ял хуçалăх совечĕн пуçлăхĕ пулнă. Çатра Маркине пĕр çемьене раскулачить тума кăларса ярать ăна председатель. Çав çемьене тĕкĕнме юрамасть тесе ял хуçалăх советне хут килнĕ пулнă. Ăна вара председателĕ нимĕн те каламан. Лешсем киле аркатса сутса сапалаççĕ. Çавăншăн Ухванеçе виçĕ çуллăха тĕрмене хупаççĕ. Асатте питĕ пăшăрханса пурăннă уншăн председатель çине. Пĕр ĕçкĕре вăл тытăçса кайнă вара Лазарь Павловичпа, ăна: «Эсĕ хутне ятарласа пытарнă, ман ывăла тĕрмене лартрăн», - тесе вăрçнă асатте.

Тĕрмерен тухасси нумаях та юлман – вăрçă пуçланнă. Ăна тӳрех фронта илсе кайнă. «Книга памяти» кĕнекери списока пăхсан, вăл Микулай шăллĕпе пĕр вырăнтах, Смоленск облаçĕнче, çапăçса вилнĕ иккен.

2. Николай (05.12.1912 ç.). Вăрçăччен Хура тинĕс морякĕ пулса çар службине кайса килнĕ. Шупашкарти тир-сăран заводне ĕçлеме кĕнĕ. Вăл вăрăм пӳллĕ, хитре сăнлă пулнă. Авланнă. Арăмĕ Валя Пархикассинчен тухнă. Ачапăчасем пулман вĕсен. Хăйĕн хушаматне улăштарнă Николай, «Зайцев» пулса тăнă. Вăрçă пуçлансан ăна çара илсе кайнă. Смоленск облаçĕнче пуçне хунă.

3. Михаил (1919 ç.). Учитель пулма вĕренме кайнă. Вĕренсе пĕтереймен – вăрçа кайма ят тухнă. Авланман. Вăрçă хирĕнче çапăçура пуçне хунă.

4. Александр (1924 ç.). Манăн атте. Салтак çулĕ çитиччен колхозра ĕçленĕ. 1942 çулта ăна салтака илсе кайнă. Лăпкă океанра Петропавловск-Камчатский хули патĕнче торпедăллă катерсен отрядĕнче çар службинче пулнă. Япони вăрçине хутшăннă. 1947 çулхи май уйăхĕнче отпуска килсен авланнă. Якку Иванчă хĕрне, А.Полытована качча илнĕ. Вĕсем пилĕк ача çитĕнтернĕ.

## АННЕ – ВИКТОРОВА /ПОЛЫТОВА/ АНАСТАСИЯ ЯКОВЛЕВНА – ТАВРАШĔ

Яков Иванович тата Прасковья Платоновна çемйинче тăхăр ача çуралнă. Арçын ачисем пĕчĕк чухнех, икĕ çула çитичченех, чирлесе вилнĕ.

Аннен амăшĕ, Праски, кăвак куçлă, сарă çӳçлĕ хитре хĕрарăм пулнă.

Анне аса илнинчен. Урамран выляса кĕтĕм, сак çине ларма тăтăм. «Кунта ан лар, унта ача», - теççĕ. Тепĕр енне ларма тăтăм. «Унта та ан лар, ача выртать», - теççĕ. Йĕкĕрешсем çуралнă иккен, Соняпа Санька.

Ун чухне вĕсем Исаксене хирĕç, Саламатинсемпе юнашар, пурăннă.

Прасковья Платоновна пуян çын хĕрĕ пулнă. Ашшĕ-амăшне раскулачить туса, япалисене туртса илсе сутса пĕтернĕ, килне салатнă.

1932 çулта ялти пуян çемьесене ссылкăна янине ачасем те лайăх аса илсе юлнă. Пĕчĕкскерсем карта хушшипе пăхса тăнă.

Анфиса 1918-мĕш çулта çуралнă. Вăрçă пуçланас умĕн Климков Аркадие качча тухнă, ывăл ача çуратнă, Николай ят хунă. Анчах нумаях пурăнайман ачи. Пуçпа аптраса вилнĕ. Вăрçă вăхăтĕнче Анфиса пĕр ялта санитарка пулса ĕçленĕ. Вăл та нумаях пурăнайман, вăрçă хыççăн йывăр йăтнипе чирлесе часах çĕре кĕнĕ.

Марья 1919-мĕш çулта çуралнă. Учительница пулма вĕренсе тухнă та Мăркаш район-

ёнчи Кашмаш ялёнчи шкулта ёçленĕ. Унăн каччи те пулнă – Михаил, анчах вăл вăрçăра вилнĕ. Анфиса та çамрăклах ÿпке чирĕпе чирлесе ÿкнĕ.

«Тиллит-тиллит тил ури
Тытас тесе чупрăм та
Ман тытасси пулмарĕ,
Иртрĕ пуль ман ĕмĕрĕм», –

тесе юрлатчĕ тет Анфиса аппĕ-амăшĕ тата Наçтиç ун патне Кашмаш ялне пырсан. Ăна, чирĕ йывăрлатсах çитерсен, килне илсе килнĕ. Чунĕ сиснĕ ĕнтĕ вилессе. Йăмăкне, Иринăна: «Эпĕ вилетĕп ĕнтĕ, сана валли юлаççĕ кĕпесем, тăхăнса çÿрĕн», – тенĕ. Вилес кун умĕн çĕрле Наçтиç ун пуçĕ умĕнчех ларнă. Анфиса аташма пуçласан, хăй та çамрăкскер, питĕ хăранă. «Сивĕ шыв пар-ха, ăш-чике уçас килет», - тесе питĕ шыв ыйтнă, анчах аппĕ-амăшĕ, хĕрĕ сывалтăр тесе, ăшă шыв анчах пама каланă. Паян куна та кулянать анне çавăн чух акăшне сивĕ шыв паманшăн, чунне уçтарманшăн. Тăнне çухатмасăрах, пĕлсех вилнĕ Анфиса. Аппĕпе амăшĕ пасара кайма пуçтарăнсан: «Ан кайăр пасара, эпĕ паян вилетĕп», – тенĕ. Ку вăл вăрçă пуçланас умĕн пулнă. Питĕ нумай çамрăк пуçтарăннă вара ăна пытарма.

Ирина 1922-мĕш çулта çуралнă. Учительница пулма вĕренсе тухсан Ырашпулăхне И.Бычкова качча тухать. Тăватă ача çитĕнтереççĕ вĕсем (Володя, Римма, Лиза, Валя). 36 çул, пенсие тухичченех, шкулта учительница пулса ĕçлет. Паян Çĕнĕ Шупашкарта, Лиза хĕрĕ патĕнче пурăнать.

Антонина 1926-мĕш çулта çуралнă. Ашшĕ ăна питĕ юратнă – те сăнĕпе хăйĕн евĕр пулнипе, те татах урăххишĕн, пĕлме çук. Тăхăр çула çитсен çу кунĕнче Ункă шывĕ хĕрне шыва кĕме каять те путса вилет Тоня. Кола-тихха патĕнчи Ункă шывĕ урлă хывнă кĕпер çинчен çÿлерех пăхсан пĕрремĕш

кукăра халĕ те «Тонь кукри» теççĕ.

Анне каласа панă тăрăх, Тоня çав кун ирех амăшĕнчен тăхăнма таса кĕпе-йĕм ыйтнă. Çак кунах амăшĕ вăрмана кăпчан тымарĕ сӳме тухса кайнă. Тоня тăвайккине темиçе хут та кайса пăхнă, хĕрачасем тухасса кĕтнĕ. Шыва кĕнĕ чух тарăн вырăна сикнĕ. Тепĕр урамри ачасем чупса пырса туртса кăларнă, анчах ниепле те пулăшайман. Ашшĕ-амăшĕ питĕ вăйлă куляннă. Амăшĕ чирлесех ӳкнĕ. Нӳхрепри сивĕ сăрана ĕçнĕ хыççăн вĕрĕлет вăл, çăпансем тухнă хыççăн ура çине тăрайман, вилсе кайнă вара.

Софья 1928-мĕш çулта çуралнă. Шкулта 7 класс пĕтерсен, ялти пурнăçа чăтаймасăр, хулана тухса каять, чăлхапа трикотаж фабрикине ĕçлеме кĕрет. Софья аки пирĕншĕн «хулари аки» пулнă. Пĕчĕк чух ăна хуларан килессе питĕ кĕтсе тăраттăмăр. Яланах тутлă çимĕçсем илсе килетчĕ вăл. Софья акипе мăшăрĕ В.Ефимов Ирина хĕрне (21.4.1962 ç.) çуратса ӳстерчĕç. Иринăн Л.Никитинпа икĕ ывăл – Павелпа Сергей. Вĕсем Шупашкарта пурăнаççĕ.

Çав вăхăтра Шупашкарта пирĕн урăх тăвансем пулман. Шупашкара кайсан çавăнпа яланах Софья аки патĕнче чарăнса тăраттăмăр. Кама кăна йышăнса хăналаса яман пуль Софья аки хăй ĕмĕрĕнче. Питĕ шел, паян вăл пирĕнпе çук, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ.

Мăшăрĕ вилнĕ хыççăн, 1938 çулта, Якку Иванчă тепĕр хут авланнă. Ама çури амăшĕн Коля ятлă ывăл пулнă. Юратсах кайман вара вăл Праскин ачисене, питех те хĕсĕрлеме пуçланă. Анне те час-часах аса илет хăй ама çури амăшĕнчен нуша курнине.

Анастасия – ман анне. Кăçал, январĕн 2-мĕшĕнче, хăй 80 çул тултарнине Мускавра, ачисем-

пе, мăнукĕсемпе пуçтаранса палăртрĕ вăл. Хĕл каçма Мускава е Радужный хулине – хĕрĕсем патне пырать. Çулла вара ялта пурăнать.

Анне шкула икĕ çул анчах çӳренĕ. Унăн амăшĕ вилсен вĕренме пăрахма тивнĕ. Килте ĕçлемелле пулнă. Шкулне Леш картиш енчи пĕр пуян çемьен çуртне çӳренĕ. Çыннисем пуянах та пулман-ха, пӳртне тимĕр листапа витнĕ те, çавăнпа пуянсем тесе шутланă ялта вĕсене. Çурт хуçисем – ватă çынсем, хĕрĕсем качча тухнă. Пурĕпĕр çак çынсенчен çуртне туртса илнĕ. Ватăсем вара çырма хĕрне кайса çĕр чавса хăйсене валли çĕрпӳрт тунă.

Анне шкулта вĕреннĕ чух вĕсем патне те кайса курнă. Çĕрĕ йĕтăнса анасран хăмасем çапса çирĕплетнĕ, юпасемпе тĕреклетнĕ тет.

Аннене Александр Захарович Захаров вĕрентнĕ. Анне килте те тăрмашнă, ачаллах тата колхоза ĕçлеме çӳреме пуçланă. 14 çулта çуллахи садикре 5-6 çулти ачасемпе воспитательница пулса ĕçленĕ. Виçĕ çул хушши тăрмашнă пĕчĕкскерсемпе.

Вăрçă пуçланнă çул, хĕл çитсен, ял халăхне Сăр шывĕ патне окоп чавма илсе кайнă. Вихтăр Саньки, Филимон Васильччă та унтах ĕçленĕ. Вăрçа çав çул кайман çамрăксем чылай пулнă. Ялти Зина Ландышевапа тата Зоя Лукинапа пĕр пӳртре пурăннă анне, пĕрле апат пĕçернĕ. Вĕсем аслăрах пулнă та, аннене хӳтĕленĕ. Ялтан аннене ама çури амăшĕ çимелли нимĕн те парса яман. Юрать-ха çынсем çитернĕ. Пирĕн ялтан 6 бригада пулнă Сăр хĕрринче. Эрнере пĕр хутчен бригадăран яла ятарласа апат-çимĕç пуçтарса илсе пыма лашапа пĕр çын пырса кайнă. Ашшĕ-амăшĕсем çĕр улми пĕçерсе тултарса парса янă. Ăна шăнтса лартнă. Кайран эрне тăршшĕпех ĕçлекенсем ăшăтса çинĕ. Анне пурăннă ял çĕр чавнă вырăнтан 6 çухрăмра вырнаçнă,

çавăнпа ирех тăрса ĕçе каймалла, тĕттĕм пулсан каялла çуранах килмелле пулнă. Бригадăри лашипе пÿртри кăмакана хутма кашни кунах вутă турттарса килнĕ-мĕн.

Анне ĕçе çăпатапа çÿренĕ. Тăхăнмалли те çукрах пулнă унăн. Тăввисене кăмака çумне хурса типĕтнĕ. Çăпатисем çĕтĕлсен çăка хуппипе юсанă. Лумпа, киркăпа шăнса ларнă çĕре тăн тухса кайиччен шакканă. Ун чухнехи пуçлăхсенчен анне халĕ те тĕлĕнет. Çак ĕçе пула халăха мĕн тери нушалантарнине ăнланман-ши вĕсем?

Пĕрре çапла, хытă шăннипе, аннен хырăмĕ çинче 22 çăпан тухса ларнă. Виçĕ кун хушши хытă чирленĕ вăл. Зина аннене мунча хутса кĕртнĕ, армути шывне ĕçтерсе сипленĕ.

Хĕл иртсен ял халăхне Иваново облаçне торф хатĕрлеме кăларса янă. Аннепе пĕрле Анастасия Быкова, Мила Степанова та тухса кайнă унта. Вăрçă чарăнсан, юр çусан анчах таврăннă вара вĕсем каялла яла. Килсенех тата, пĕр-икĕ кунранах, сельсоветрисем аннене йăлăма кăларса янă. Йывăç каснă, вуттине лашапа Ишлей станцине турттарнă.

Аннене пĕр хутчен кăна мар нарядсемпе ĕçлеме кăларса янă. Ама çури амăшне килте çăкăр çисе ларакан ытлашши çăвар кирлĕ пулман. «Çăвăнма, мунчана кайса килме те ĕлкĕрейместĕмччĕ, каллех наряда кăларса яратчĕç», – тесе аса илет анне.

Вихтăр Санькkине (1947 ç.) качча тухсан, анне колхозра ĕçлеме пуçлать. 4 çул фермăра телятница пулса, кайран, пенсие тухиччен (1973 ç.), пахча-çимĕç бригадинче вăй хурать. Паян кун та ĕçрен пăрăнмасть, совхоз ĕçĕсене хутшăнать, кÿршĕ ачине – Г.Александров фермера – вăйĕ çитнĕ таран пулăшать.

# ЯЛ ЯЧĔ ПИРКИ

Пирĕн таврана «тăватӑ Марки таврашӗ» теççĕ халăх хушшинче. Ахальтен мар кунта Мăн Марки, Кивçурт Марки, Çатра Марки, Шорти Марки ялĕсем вырнаçнă.

Г.Комиссаров ăсчах палăртнă тăрăх («Чăваш халăх историйĕ», Хусан, 1921 ç.), «Марха» (Марка) – авалхи пăлхар халăхĕн сăмахĕ. «Марха (Марка) ятлă чăваш ялĕсем халĕ те пур. Етĕрне уесĕнче тăватă ял», – тесе çырать вăл. Г.Комиссаров хăйĕн кĕнекине хатĕрленĕ вăхăтра (1917-1918 çç.) пирĕн ял Етĕрне уесне кĕнĕ. Апла пулсан вăл пирĕн ялсен ячĕсем çинчен çырнă. Шел, çын ятне пĕлтерет-ши ку сăмах е урăх япала ятне – çирĕплетсе каламасть тĕпчевçĕ-ăсчах.

Пирĕн тавраш пăлхарсемпе, вĕсен сăмахĕсемпе тачă çыхăнни çакăнтан та курăнса тăрать. Эпĕ çуралса ӳснĕ çуртăн чӳречинчен Кăшканар тăвайккинелле пăхсассăн Тăрăн ялĕсем курăнса каяççĕ. Унта виçĕ Тăрăн ялĕ вырнаçнă: Анаткас-Туруново, Шинер-Туруново, Вурманкас-Туруново.

«Тăрăн» сăмах пирки Г.Комиссаров кĕнекинче каллех ăнлантарнине тупатпăр. Троицкий ятлă вырăс летописçĕнче çапла каланă: «Пăлхарсен патши çумĕнче улпутсем пулнă, вĕсене турунсем (тăрăнсем) тесе чĕннĕ», – тенĕ. «Тăрăн» ятлă чăваш ялĕсем тата та пур: Етĕрнепе Чикме уесĕнче тăхăр ял, Пăва уесĕнче пĕр ял, Кукшай уесĕнче, халĕ чăваш çук çĕрте те, тепĕр ял пур».

Авалхи пăлхар сăмахĕсем пирĕн таврашра мĕнле упранса юлма пултарнă-ши? Ку вăл «Марка», «Тăрăн» ялĕсем Пăлхар çĕршывĕ арканса кайнă вăхăтрах пуçланнине пĕлтермест-ши? Пиншер çын Пăлхар çĕрĕн тĕп вырăнĕсенчен куçса кайса çĕнĕ ялсем йĕркеленĕ пулас. Апла пулсан пирĕн ял çулĕпе 770-е те çитет пулĕ.

Эпĕ пăхса тухнă архив кĕнекисене илсен, ял ячĕ пирки тата çакна каласшăн. Юлашки 250 çулта икĕ сăмахран тăракан ят – «Анаткас Марги» пилĕк хутчен те улшăнать (е пĕрремĕш сăмахĕ улшăнать, е иккĕмĕшĕ).

1761 çулта чăваш халăхне виççĕмĕш хут шутланă (çырса илнĕ). Шупашкарти архивра упранакан «Ревизские сказки, составленные на жителей г. Чебоксар и Чебоксарского округа». 1761 г., 111-ревизия» ĕçре пирĕн ял ятне «Марково» тесе çырнă. Çак вăхăтра ялта 226 çын пурăннă (вĕсенчен виççĕшĕ кăна тĕне кĕнĕ пулнă).

1883-1913 çулсенче, Ишек чиркĕвĕнче çырса пынă «Метрика кĕнекисенче...» пирĕн ял «Марково Анаткасово Козъмодемьянского уезда Казанской губернии» шутланать. Çывăхри ялсене «Марково Малдыкасово», «Марково Сятракасово», «Марково Кивсюрта» тенĕ.

1902-1913 çулсенчи çав метрика кĕнекисенчех «Анать Касовь Ядринского уезда» ял ячĕ тухать. Пирĕн ялах-ши ку? Пĕр вăхăтра вăл Етĕрне уесне кĕнĕ тенине илтнĕччĕ-ха эпĕ. Çакă хăш вăхăтра пулнине аса илеймерĕм.

Архивра ĕçлекенпе тата тепĕр справочникра та шыраса пăхрăмăр. Унта вара манăн ял Етĕрне уесне «С 1916 года» анчах кĕме пуçлать тесе çырнă. Пăтраштарсах яратчĕ ку справочник. Юратьха, ăна ĕненмесĕр, çак çулхи «Метрика...» кĕнекисене тĕплĕн пăхса тухма шутларăм.

Хамӑн асаттепе асаннен ывӑлӗсене Афанасийпе (29.09.1911 ç.) Николая (05.12.1912 ç.) шыраса тупсан кӑна çакна ӑнлантӑм вара – вӑл вӑхӑтра пирӗн ял ячӗ «Анат Касов» пулнӑ. Вӑл Етӗрне уесне кӗнӗ. Юнашар ялсене «Малдыкасово», «Сятракасово», «Кивсюрт» тесе çырнӑ. Темшӗн пур ялӑн та «Марково» сӑмахӗ çухалать.

Революци хыççӑн 1946-мӗш çулччен пирӗн ял ячӗ «Анаткас Марково» пулнӑ. 1946-мӗш çулхи апрелӗн 1-мӗшӗнчен пуçласа паянхи куна çитиччен ял ячӗ «Анаткас-Марги», чӑвашла каласан Мӑн Марки пулать.

## КОЛА-ТИХХА УРАМĔ

«Кола-тихха» сăмах ăҫтан пуҫланса кайнине тупас тесе чылай ҫынпа калаҫрăм. Ҫак урам ячĕ вăтăрмĕш ҫулсенче, урамĕнче ҫуртсене икĕ ретпе йĕркелесе лартсан, пуҫланса кайнă пулас. Вăл вăхăталла ял урамĕ А.Т.Тимофеевсен ҫурчĕ патнелле анчах ҫитнĕ. Вĕсен ҫырминче, анатри шкула лартнă вырăнсенче, нумай ҫамрăк ҫемье (уйрăлса тухса) мунча пек пĕчĕк пӳртсенче пурăннă. Ку вăхăт ҫитиччен ҫĕнĕ ҫемьесем, пирĕн асатте те, уйрăлса тухса анаталла, хальхи Кола-тихха урамĕ еннелле ҫуртсем лартма пуҫланă. Пӳрчĕсене вĕсем ҫырма хĕрне лартнă, анкартисем уй еннелле пулнă. Ҫурчĕсем пĕр ретпе ларнă, кантăкĕсем Ункă еннелле пăхнă. Ҫырма хĕррипе урапапа тата ҫуран ҫӳремелли ҫулсем иртсе пынă. Ĕлĕкхи ҫул йĕрне пирĕн анкарти хыҫĕнче хаљ те тупма пулать. Ҫурчĕсем пĕр ретпе анчах вырнаҫнă. Ҫавăнпа урам пулман пулас.

Вăтăрмĕш ҫулсенче ытти ҫемьесене те куҫса кайма ирĕк панă. Вĕсем ҫурчĕсене тепĕр ретпе, асаттесен анкарти хыҫĕпе, лартса пынă. Пирĕн асаттесемпе пĕр ретре пурăнаканнисем те вара хăйсен кил-ҫурчĕсене ҫырма хĕрринчен анкартин тепĕр енне куҫарса лартнă. Ҫапла вара ҫĕнĕ урам пулса тăнă. Урам вĕҫĕнче Анна акин ашшĕ ҫурт лартнă. Ҫав ҫурт паян кун та юлашки, ял вĕҫĕнчи ҫурт пулса юлнă.

«Кола-тихха» сăмах пирки ватă ҫынсем ҫапла каласа пачĕҫ. Ҫак урамра питĕ чухăн ҫемьесем

пуранна. Ҫӗрӗ те ыра ҫӗр пулман ҫав выранта. Ялти халах «кунта голод, тихо выранӗ» тесе калана пулать.

Чанах та, ку урамра пӗтӗмпех ялти тӗп ҫемьесенчен уйралса тухна ҫамрак ҫемьесем вырнаҫна. Хашӗ-пӗрин мунча пек ҫуртсем анчах пулна. Теприсен тата та хавшак пулна пулӗ. Ҫаванпа ӗнтӗ «голод, тихо» самахсене вахат иртнӗ май чавашла ҫемҫетсе «колатиха» тесе калама пуҫлана тени тӗрӗс те пулӗ...

## УНКĂ ХĔРРИПЕ КИЛЕ УТАТĂП

«Ункă, Юнкă, Мăркавăш ятлă шыв ячĕсем финпа угор чĕлхисенчен тухнă темелле», – çырать Г.Комиссаров. Апла пулсан ку шыв ячĕсем те авалхи ятсем-сăмахсем?

Шупашкартан автобуспа е машинăпа вĕçтерсе пынă чух Чиканар тăвайккинчен Ункă шывĕн çĕлен пек авкаланакан çыранĕсем курăнса каяççĕ. Кĕпер çине çитсен икĕ еннелле пăхса илме тăрăшатăп – шывĕ туллин йăлтăртатать-и, çыран хĕрринчи йăмрасем епле çитĕнеççĕ-ха, самаях-и вĕсем?..

Ункă шывĕ хĕрне тухсан киле çитнĕн туятăп хама.

Ишек пасарне çитес умĕн тата тепĕр кĕпер урлă каçса каймалла – Мăркаш шывĕ урлă хывнă кĕпер. Çак вырăнта юхан шывĕ питĕ васкаса юхса иртет, Ункă шывĕпе тĕл пулса пĕрлешме васканăн туйăнать.

Ишек ялĕ умĕнче Мăркаш шывĕпе пĕрлешнĕ хыççăн Ункă вăйланса, сарăлса Кипеккасси ларнă тăвайккине çитиччен уй урлă юхса иртет. Кунта ачаранах Ункă çыранĕпе пыракан çулпа Ишек пасарне те чупнă, шкулне те кунти çулсемпе хăпарса çӳренĕ икĕ çул хушши. Ялти çулсем ун чухне питех те япăхчĕ, çумăр хыççăн пушшех те. Çыран хĕррипе вара таçта та çитме пулатчĕ - çĕнĕ газон çинчи пек симĕс курăк тăрăх утса, чупса çӳреттĕмĕр.

Кипеккассипе Хура çырма хушшинчи улăхра

Вил Ункă сарăлса выртать. Нумай çул каялла кунти улăхра Ункă çĕлен пек авкаланса çӳренĕ, шыв тулса кайсан е çуркунне пăр кайнă чухне юхăм хăйне валли тӳрĕрех çул шыранă, тупнă. Улăхра вара вăрăм кӳлĕ тăрса юлнă. Ача чухне кунта самаях шыва та кĕреттĕмĕр, пулă та тытаттăмăр. Улăха илем кӳрекен кӳлĕ те, вĕçен кайăксем те час-часах канма чарăнаççĕ кунта. Утă çулма та çӳретчĕ ку таврана пирĕн ял халăхĕ.

Кĕçех, çыран хĕррипе утса пынă май, ялăн Леш картиш урамĕ курăнса каять.

Ял пуçĕнче Ункă шывĕ пиншер çул хушши Чĕкеç тăвĕн хырăмне кăшласа ишĕлтерет. Хĕрлĕшурă тăм Чĕкеç тăвĕн çыранĕ тăрăх речĕречĕпе курăнса тăрать. Юхан шыв çак ту çумĕпе çĕршер утăм хушши вакă-вĕтĕ чулсем тăрăх шăнкăртатать. Хĕрĕх пилĕк çул каялла, эпĕ ача чухне, пиншер чĕкеç кайăкĕ çак ту çыранĕнче йăва хыватчĕ. Кунĕн-çĕрĕн чĕвĕлтетсе вĕçетчĕç, пĕрле пухăннă вăхăтра хура пĕлĕт пек туйăнатчĕç. Ту ячĕ те çак кайăк ятĕнчен тухса кайнăн туйăнать мана. «Чĕке(ç)ту» тет халăх ку вырăна.

Кăçал çак ту патне пĕр кайăк вĕçнине те кураймарăм, йăвасем çавăрма пăрахнă иккен чĕвĕл чĕкеçсем кунта. Те çырансем хăвăрт ишĕлнипе, те урăх сăлтавпа.

Çакăнта, Чĕкеç тăвĕ çумĕпе, Ункă шывĕ ялăн Леш картиш урамĕ еннелле пăрăнса каять. Тахçан вăл Мăн Марки вырнаçнă çӳллĕ вырăн хĕррипе çĕлен пек авăнса юхни палăрать. Пиншер çул иртнĕçемĕн, çуркуннесенче, шыв вăйлăн юхнă май çырансене ишĕлтерсе пынă, çавăнпа Ункă шывĕ майĕпен тӳрленнĕ. Халĕ вара юхан шыв ял еннелле кăшт пăрăнать те Кола-тихха урамĕ вĕçне тухать.

Шыв çаврӑнса çӳренӗ вырӑнта халӗ лапӑм. Ял çывӑхӗнче – шурлӑх. Лапӑмра яланах совхоз пахча-çимӗç лартса çитӗнтеретчӗ. Мӑн Марки ялӗ, çырма хӗрринче вырнаçса ларнӑскер, шыв ӑсма тухнӑ çынна аса илтерет: ял варринчи урамӗ – кӗвенте, Леш картишпа Кола-тихха урамӗсем – шыв тултарма çакса янӑ витрисем.

Чи шӑрӑх вӑхӑтра та шурлӑхра шыв типмест. Унтан пӗр пӗчӗк юхан шыв – Пыр юхса тухать Ункӑна. Пыр шывӗ пирӗн анкарти хыçӗнченех юхса иртсе каять. Ача чухне, каçсерен, вӑтӑршар витре тӑвайккинелле йӑтаттӑмӑр, пахча çимӗçсене, пан улми йывӑççисене шӑвараттӑмӑр.

Пирӗн анкарти кӗтессинчен çухрӑм ытла тӑсӑлакан карта пуçланса каять. Вӑл тӑвайккинелле анса каять те, Пыр, шурлӑхлӑ вырӑнсем урлӑ каçса, Леш картишӗнче ларакан тепӗр анкартипе çыхӑнать. Ялти выльӑх-чӗрлӗх ырӑ курать вара çак вырӑнта çу каçиччёнех: уя тухса каясси çук, шыв тата симӗс курӑк çителӗклӗ. Хӑш-пӗр çемьесем выльӑхсене кӗтӗве те хӑваламаççӗ, çак çырмарах усраççӗ.

Çырма хӗррипе вун-вун çӑл куçран таса, сивӗ, сиплӗ шыв шӑнкӑртатса выртатчӗ. Темиçе кӳлӗ те пурччӗ ӗлӗкрех. Траль кӳллинчи пек сивӗ те таса шыв курман та пулӗ эпӗ.

Пирӗн урам вӗçӗнче Ункӑ хӗрринелле Алексей Осипович чавса, хӑмасемпе картласа çӑл туса хунӑччӗ. Юхан шыв урлӑ каçмассерен, уй-хиртен таврӑннӑ чухне çӑлран выртса е ӑсса илсе ӗçӗттӗмӗр çак чуна уçакан шыва. Вӑл лартнӑ йӑмрасем айӗнче сулхӑнра канса илеттӗмӗр.

Çанталăк, пурнăç улшăнсах пынă май пĕтернĕ çак çăла. Траль кӳлли те çук тахçанах...

Юлашки 10-15 çулта мĕне кăна пĕтерсе лартмарĕ пулĕ пурнăç. Пурнăçах-ши е çынни-сем? Калама йывăр. Ялти темиçе фермăри пине яхăн шултра мăйракаллă выльăх пусĕн-чен пĕртен-пĕр лаша тăрса юлнă.

Купăста çитĕнтерес ĕçсене анчах мар, фер-мăсенчи выльăх-чĕрлĕхе те темиçе çул хуш-шинчех пĕтерчĕç пуçлăхсем...

Ял пурнăçĕ чĕрĕлме, вăй илме пуçлани çинчен калакан тĕслĕхсем пур-ши? Пур иккен. Икĕ фермер ялта вуншар гектар çĕрпе аппала-наççĕ.

Питĕ лайăх ял çумĕнчех юхан шыв пурри. Пулăçсем пулă тытса канаççĕ. Шăрăх çанта-лăкра ачасем те, ваттисем те шыва кĕреççĕ. Ача-пăчасем вара шывран тухма та пĕлмеççĕ.

Кола-тиххаран Ункă шывĕ Çатра Марки ялĕ еннелле çаврăнса каять. Тулли шыв авăр-сенче ташла-ташла çаврăнать. Кайран хăйĕн çулĕпе малалла ыткăнать. Унтан унăн Çавал шывĕпе пĕрлешсе аслă Атăла тухмалла.

## 243 ÇУЛ КАЯЛЛА

Шупашкарти архивра ман алла тата çакăн пек кĕнеке лекрĕ – «Ревизские сказки, составленные на жителей г. Чебоксар, Чебоксарского округа, 1761 г., 3 ревизия». Унта икçĕр хĕрĕх виçĕ çул каялла ирттернĕ шутлав (перепись) материалĕсем. Ĕлĕкхи вырăссен саспаллийĕсемпе çырнă текстра Мăн Марки çыннисем çинчен, Христос тĕнне кĕртни е кĕртменни, мĕн ятлă пулни çинчен çырнă. Тата кашни çын миçе çул тултарнине палăртнă. Текстăн пуçламăшне архивра ĕçлекен сотрудник куçарса пачĕ.

Çапла çырнă ку авалхи кĕнекере: «Деревня Маркове из чуваш крещенные и не крещенные перечисленной после прежней переписи до нынешней генеральной ревизии некрещеный – Пари Яндубиев, 21 (лет). У него брат перечисленный же после прежней переписи до нынешней генеральной ревизии крещенный – Илья Андреев, 11 (лет).

Умершего написанного в прежнюю перепись Стенки Торбиева рожденные после переписи дети:
некрещенный Баргалей 15 (лет);
крещенный Прокофий Семонов 10 (лет)»...

Малалла çак списокра авалхи чăваш ячĕсем те тĕл пулаççĕ: Баргат, Ишпарос, Ишпаран, Яндеяр, Солдер, Яолен тата ыттисем те. Пĕтĕмпе пирĕн ялта çак вăхăтра 226 çын пурăннă, вĕсенчен виççĕшĕ анчах Христос тĕнне йышăннă пулнă.

Ку списока, тĕплĕнрех куçарсан, пичетлесе кăларас шухăш та пур-ха.

# СИМӖС ҪЫРЛА

Ача чухне пӗррехинче анне Шупашкартан симӗс ҫырла илсе килчӗ. Йӗкел пек вӑрӑмскерсем, пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Пӗр пысӑк муклашка кӑларса хучӗ анне сӗтел ҫине. Ҫанталӑк сивӗтсен пулнӑччӗ ку. Ача шучӗпе ҫырла хӗрлӗ тӗслӗ пулмалла е хӑмӑртарах – ҫавӑнпа ӗнтӗ малтан тӗлӗнсе анчах пӑхса илтӗмӗр Коля шӑллӑмпа ҫырла ҫине. Килте асатте кӑмака хутса кӑларнӑччӗ. Анне ҫырласен муклашкине чашӑка хучӗ те кӑмака хуппине уҫса ҫырлана унта ӑшӑнма кӗртсе лартрӗ.

Ӑшӑнса ҫитессе кӗтсе илеймерӗмӗр шӑллӑмпа. Анне айккинелле пӑрӑнсанах кӑмака хыҫӗпе ҫаврӑнса пырса тӑтӑмӑр чашӑк умне. Кӑмака пуҫне алӑпа кӗрсе кайса пӗрер ҫырла татса илтӗмӗр те – чӑмрӑмӑр каялла.



Якаскер, пӗр енчен ӑшӑ, тепӗр енчен сивӗ... Нӳрӗ ҫырлана хыпрӑм ҫӑвара – тӳрех анса каясшӑн пулмарӗ тата. Ҫӑтӑрт-ҫӑтӑрт ҫыртрӑм та, ҫемҫе те пыл пек тутлӑ шӗвек ҫӑвара тултарса лартрӗ.

Мĕнле сĕтеклĕ, уçă çимĕç пулчĕ ку çырла...
Ăшăннă вăхăтра пĕрре анчах мар шăлăнса тухрăмăр кăмака хыçĕпе шăллăмпа. Чашăк тăррине самай пĕчĕклетрĕмĕр ăна сĕтел çине кăларса лартиччен.
Тĕлĕнмелле тутлă çырла çисе куртăм çав каç. Ятне те ун чухне пĕлмен-ха унăнне. Анне каланă пулĕ те виноград ку тесе, – астумастăп.
Кашнинчех, анне хулана кайма пуçтарăнсан, «Çав симĕс çырлине илсе кил-ха», – тесе тархаслаттăмăрччĕ. Çав çулсенче анне илсе килеймерĕ урăх хуларан виноград. Те укçи-тенки çитеймен, те ун чух хальхи пек çулталăк тăршшĕпех сутайман ку çимĕçе...
Киле таврăнсан вара анне пирĕн ыйтусем çине: «Çырла сутакан майрисем шăнса вилнĕ», – тесе хуравлатчĕ. Шеллеттĕмĕрччĕ вара майрисене.
Ирĕке кайсан, ĕçлеме пуçласан, тăраниччenex çисе пăхрăм ку çырлана. Симĕс тĕслĕ анчах мар иккен вăл, ячĕсем те темиçе унăн: «хĕвел çырли», «янтарь çырли» те теççĕ ăна. Темĕн тĕрлĕ çимелли апат, ĕçмелли напиток тăваççĕ халĕ виноградран.
Кăçал çуркунне Геленджик хули çывăхĕнчи санаторие канма кайсан ятарласа çитсе куртăм тусем хушшинче вырнаçнă Шампань эрехĕ тăвакан «Абрау-Дюрсо» завода.



Сыпса курман мар-ха ку «турă напитокне». Завода кĕрсен пире çак шĕвеке мĕнле технологипе хатĕрленине каласа пачĕç. «Купаж» тунă цехра, конвейер умĕнче,

кĕленчери шĕвеке вăхăт ҫитиччен тытса тăмалли «нӳхрепсене» ҫитсе куртăмăр. Пирĕн ялти нӳхрепсем пек мар вĕсем – 5 ҫухрăм ытла тăсăлаҫҫĕ, урапи-лашипе кĕрсе кайсан чуптарса ҫӳреме пулать кунта. Темиҫе миллион кĕленче виҫшер ҫул хушши унти шĕвек пиҫсе ҫитессе кĕтсе выртать. Ҫак вăхăтрах кашни ҫул кунта ĕҫлекенсем шĕвек йӳҫни лайăхрах, хăвăртрах пытăр тесе пур кĕленчене те алла тытса силлесе тухаҫҫĕ.




Дегустаци залне ҫитсен малтанах шампанские мĕнле ĕҫмелли пирки каласа кăтартрĕҫ. Тĕрлĕ технологипе хатĕрленĕ тĕрлĕ напитока ĕҫсе пăхрăмăр, пĕр-пĕринпе танлаштартăмăр.

Кунта чи хăвăрт меслетпе тунă чи йӳнĕ Шампань эрехĕ Мускаври чи хаклă шампанскинчен ҫĕр хут тутлăрах, спирт шăрши сăмсана пырса ҫапмасть, пĕртте сисĕнмест вăл. Пуҫ пачах та ыратмарĕ тепĕр кунне.

Икĕ ҫул хушши тытнă шампанские те ĕҫсе пăхрăмăр. Чăн «турă напитокĕ» пекех пулчĕ вăл.

Мĕнле напиток хатĕрлеҫҫĕ-ши халăх валли Мускав таврашĕнче тесе шухăшларăм вара. Чăн та, «Абрау-Дюрсо» заводра тата Мускав таврашĕнче хатĕрленĕ напитоксен пĕрпеклĕхĕ – кĕленчине уҫсан пăкки шанклаттарса сиксе тухнинче анчах иккен.

Ҫапла та каласшăн тата. Хамăн юратнă симĕс ҫырла ҫинчен халиччен темĕн те пĕлетĕп тесе шутланă эпĕ. Паян вара ҫак «хĕвел» ҫырлин вăрттăнлăхне пĕлсе ҫитерме икĕ ĕмĕр те ҫитес ҫуккине аванах ăнланатăп.

*Р.Бредбери*

## ВЕЛЬД
## /Пӗр сыпӑк/

– Тархасшӑн, Джорджи, ачасен пӳлӗмне тӗрӗсле-ха.

– Мӗн пулнӑ тата унта?

– Пӗлместӗп.

– Чӑнах, мӗн ӗҫ пур-ха унта?

– Нимех те ҫук. Ҫапах та эпӗ сана ҫак пӳлӗме пӑхтарасшӑн. Е психиатра чӗн – вӑл тӗрӗслетӗр ӑна.

– Психиатрӑн мӗн тумалла тата ҫак пӳлӗмре?

– Сӑлтавне эсӗ хӑвах лайӑх пӗлетӗн, – тӑвата ҫын валли нӑйлатса каҫхи апат пӗҫерекен плита ҫине пӑхрӗ кухня варринче тӑракан хӗрарӑм. – Тӑнла-ха эс. Пирӗн ача пӳлӗмӗ халь малтанхинчен пачах улшӑнчӗ.

– Юрать, кайса пӑхӑпӑр.

Вӗсем хӑйсен сас-чӗве тытакан «Пурте телейшӗн» ятлӑ ҫуртӑн коридорӗпе утса кайрӗҫ. Ку ҫурт пӗтӗм япалапа пӗрле вӑтӑр пин доллара ларнӑ. Пур ӗҫе те тума пултарнӑ вӑл: хуҫисене тумлантарнӑ, пӗҫерсе ҫитернӗ, ачашланӑ, сиктерсе ҫывӑратнӑ тата юрӑ-ташӑпа килентернӗ.

Пӳлӗме ҫитме пилӗк утӑм юлсан, темскер чӑнклатрӗ те, пӳлӗм ҫуталса кайрӗ. Вӗсем коридорпа пынӑ чухне светильниксем пӗрин хыҫҫӑн тепри ҫутӑлса вӗсен ҫулне ҫутатса пычӗҫ, кайран хӑйсемех сӳнчӗҫ.

– Ҫитрӗмӗр, – терӗ Джордж Хедли.

Вӗсем хӑмӑш ашӑкӗ сарнӑ урай ҫине кӗрсе

тăчĕç. Ку пӳлĕмĕн лаптăкĕ çĕр хĕрĕх тăватă тăваткал метр, çӳллĕшĕ – вунă метр. Вăл хăй уйрăммăн вун пилĕк пин доллара ларнă. «Тĕнчере лайăххи пĕтĕмпех ачасем валли пулмалла», – татса хучĕ ун чухне Джордж.

Шăплăх. Таврара – чи шăрăх вăхăтри вăрман уçланкинчи пушăлăх. Пур енче те икĕ виçеллĕ яп-яка стенасем. Вĕсем Джорджпа Лиди куçĕсем умĕнчех нĕрĕлтетсе ирĕлчĕç те таса инçетре çухалчĕç. Кĕçех Африкăри Вельд (Вельд – кăнтăр Африкăри этем ура пусман çеçенхир) куç умне тухса тăчĕ – виçĕ енлĕ, тĕрлĕ тĕслĕ, чăнчăн пек, вĕтĕр-шакăр чулсемпе, курăксемпе. Мачча вырăнĕнчи тӳпере вĕри те хĕрлĕ хĕвел курăнчĕ.

Джордж Хедли хăйĕн çамки çинче тар тапса тухнине туйрĕ.

– Атя-ха, хĕвел айĕнчен таратпăр, – сĕнчĕ вăл мăшăрне. – Чăн хĕвел пекех пĕçертет ку. Тĕрĕссипе, эпĕ пӳлĕмре мĕн улшăннине чухлаймарăм. Пурте малтанхи пекех пулас.

– Тăхта пĕр самант. Ак кĕçех курăн, – терĕ арăмĕ.

Çак вăхăтрах куçа курăнман аппаратсем ĕçлеме пуçларĕç. Хĕвелпе хĕртĕннĕ çеçенхирте тăракан икĕ çын çине тĕрлĕ шăршлă сывлăш хумĕсем çитрĕç: курăк шăрши, çывăх юхан шыв шăрши, сăмсана касакан выльăх-чĕрлĕх шăрши, хĕрсе кайнă сывлăшра хĕрлĕ пăрăç пĕлĕчĕ пек вĕçекен тусан шăршийĕ. Акă сасăсем те илтĕнчĕç: хытă çерем çинче антилопăсен ушкăнĕ тапăртатни, вăрттăн йăпшăнса пыракан тискер кайăксем чăштăртатни...

Тӳпере пĕр мĕлке вăшлатса иртрĕ. Çӳлелле пăхса тăракан Джордж Хедли пичĕ салхуллanса кайрĕ.

– Йĕрĕнчĕк чĕрчунсем, – илтрĕ вăл арăмĕн сассине.

– Çăткăн кайăксем.

– Пăх-ха, арăслансем. Çав енче, инçетре. Авă, авă! Шыв ĕçме каяççĕ. Куратăн-и, вĕсем унта темскер çирĕç?

– Пĕр-пĕр выльăха пулĕ, – Джордж Хедли çунтаракан хĕвелтен куçĕсене аллипе хÿтĕлерĕ. – Зебрăна... Е жираф çурине...

– Эсĕ çакна ĕненсех калатăн-и? – арăмĕн сасси ăна яланхи пек туйăнмарĕ.

– Халĕ тĕрĕссине пĕлеймĕпĕр, кая юлтăмăр, – шÿтлесе കаларĕ Джордж. – Эпĕ кăшласа пĕтернĕ шăмăсене тата мĕн тăрса юлнине пуçтаракан çăткăн кайăксене кăна куратăп.

– Эсĕ такам кăшкăрнине илтмерĕн-и? – терĕ арăмĕ.

– Çук-çке.

– Самант каялла.

– Çук, нимĕн те илтмерĕм.

Арăслансем майĕпен çывхарчĕç. Джордж Хедли, миçемĕш хут ĕнтĕ, çак пÿлĕме тăвакан конструкторăн пысăк ăс-хаваленчен тĕлĕнчĕ. Шутласа ил-ха – калама çук тĕлĕнтермĕш япала – ĕненмелле мар йÿнĕ хакпа. Кашни хуçан кун пек пÿлĕмсем пуласчĕ! Чăнах та, тепĕр чух вĕсем, пур енчен те тĕплĕн шухăшласа тунăскерсем, хăйсенчен пистереççĕ, тĕрĕссипе каласан, шиклентереççĕ, кăмăла пăсаççĕ. Час-часах вара ку пÿлĕм ача-пăчашăн анчах мар, хăвăршăн та – вăйă вырăнĕ. Йăлăхтарнă вырăна улăштарма, кĕске вăхăтра тĕрлĕ çĕршыва çитсе курма пулать çак пÿлĕмре. Сăмахран, хальхи пек!

Акă икĕ-виçĕ утăмри арăслансем. Чăн-чăн пек вĕсем. Тĕлĕнмелле пĕрешкел вĕсем чĕррисемпе. Хăвăн ÿтне синтетикăллă çирĕп тир кăтăкланине туятăн. Хĕрсе кайнă чĕр-чун тирĕнчен çăварта тусанлă çивитти шăрши тытăнса тăрать. Саррăн вылякан тискер кайăксен тирĕ куçра француз гобеленĕ пек çутăлать...

Йĕри-тавра – типнĕ курăксен тата арăслан ти-

рёсен саралахě. Кăнтăрлахи шăплăхра арăслансем хашлатса сывлаççĕ, карса пăрахнă сĕлекеллĕ çăварĕсенчен аш шăрши кĕрет.

Арăслансем Джорджпа Лиди çине хăрамалли хĕрлĕ куçсемпе пăхса илчĕç те утма ча-рăнчĕç.

– Асăрхан! – кăшкăрса ячĕ Лиди.

Çак вăхăтра арăслансем вĕсем çине сикрĕç. Лиди алăк патне ыткăнчĕ. Джордж – ун хыççăн. Акă вĕсем коридорта, алăкне хупса лартнă. Джордж кулать, Лиди – макăрать. Пĕр-пĕрин çине пăхса тĕлĕнеççĕ.

– Джордж!

– Лиди! Манăн мĕскĕн, манăн хаклă, манăн савнă Лиди!

– Вĕсем пире кăшт анчах тытса çимерĕç!

– Стенасем, çутăпа вылякан стенасем, Лиди. Çакă анчах, урăх кунта нимĕн те çук. Паллах, эпĕ тавлашма пултараймастăп, чĕрчунсем чăн-чăн пекех курăнаççĕ. Пирĕн пӳлĕмре – Африка! Ку, паллах, экран, одорофон тата стереоаппарат витĕр тухакан калăпăшлă чуна тивекен фильм тата сасăсем анчах-ха. Акă, ил-ха ман тутăра.

– Эпĕ шикленетĕп. – Макăра-макăра, Лиди упăшки патне çывхарчĕ те, ăна çупăрласа илчĕ. – Эсĕ куртăн-и? Эсĕ тăнлантăн-и? Ку – майсăр тĕрĕслĕх (килĕштермелле мар чăнлăх).

– Итле-ха, Лиди...

– Питерпа Вендине кала – Африка çинчен урăх нимĕн те ан вулаччăр.

– Юрать, юрать, – арăмне пуçран ачашласа илчĕ Джордж. – Паллах.

– Манăн нервăсем лăпланиччен ачасен пӳлĕмне пĕр темиçе кунлăх хупса ларт.

– Эсĕ пĕлетĕн вĕт-ха – Питера ăнлантарма питех те йывăр...

## ЭПИГРАММĂСЕМ

**А.И-ва**

Шоу-бизнес – санăн çăкăр,
Чĕллине касан пĕлсе.
Ал(ла) Борисовна - çут çăлтăр,
Çĕкленнех санпа пĕрле

Чăвашсемшĕн те тăрмашнă
Концертсем хатĕрлесе.
Пĕр каçа укçасăр пынă
Ветеран туя тытса.

Çамрăксем ăна кĕртсессĕн,
Эс васкарăн ун патне.
Кăкăртан тытса кăлартăн,
Эсĕ çакă ват çынна:

«Кĕресси укçасăр пулмĕ
Малашне никамшăн та».

* * *

Пуян çын укçашăн пĕтĕ,
Тĕп чăваш пулсассăн та.

**Александр Н-а**

Ĕçсемпе тахçантанпах
Эс тухнă-ха канма.
Чунупа çамрăкранах
Пĕлен «интрижкăсем» тума.
Кашни ĕçре эс – прокурор,
Паратăн хак кашни çынна.
Никам çинчен сан тутуран
Ырă сăмах тухман-ха.

**Ира Б-на**

«Шупашкарта çук ман пекки –
Эп чи чаплă Ти-Ви пики.
Мускав Ти-Ви çине тухса
Кăтартăп эп ентешсене».
Шухăшусем сан пит те ырă.
Эс çак ĕçе тусан халь, Ирă,
«Лужковăн кепкине» хывса
Пуçа эп тайăп тав туса.

## Парăм

Анне ялан ман асăмра, –
Ун умĕнче эп парăмра.
Тытса чараймăп вăхăта,
Тунсăх пусать ман чунăма.

Çулсем иртеççĕ васкаса, –
Хам та пыратăп ватăлса.
Час çӳреместпĕр çав пырса,
Парса татаймăп парăма...

## Тунсăх

Тăрна вĕçет кăнтăртан
Хăй çуралнă вырăна.
Сивĕ йăвине тупсан
Канăçлăх килет ăна.

Хавхаланса, вăй пухса,
Пурнăç тăвас тивĕçпе
Йăвине вăл ăшăтать,
Сипленет çĕр ăшшипе.

Аякри чăваш тăрна пек
Кил еннелле туртăнать.
Тăвана аса илсен тек
Унăн чунĕ пăлханать.

## Васкатăп

Ял енне утса васкатăп
Мускаври çулпа çитсен.
Ачари чунпа çунатăп
Мăн Марка çулне тухсан.

Ишекрен иртсен çухалмăп,
Утăп чи кĕске çулпа.
Сулахай енпе пуçларĕ
Ырашпулăх курăнма.

Сылтăма эп тишкеретĕп:
Юнашар ялтан пĕри –
Анатри Кипеккасси,
Инçех мар – Хура çырма.

Чул сарса хăпартнă çулĕ
Васкатать, ав, кил енне.
Хурăнсем, ак, карталаннă
Пикесем пек улăхра.

## Тӗлӗнтеретӗн...

*/Гена Викторова/*

Эс мана тӗлӗнтеретӗн:
Калаҫма майне пӗлетӗн,
Ӑс парса вӗрентейретӗн.
Ывӑна пӗлми ҫӳретӗн,
Тем тума та ӗлкӗретӗн.

Найкӑшнине юратмастӑн,
Куҫҫульне те ырламастӑн,
Ассӑн сывлама хушмастӑн.
Маншӑн канлӗхне курмастӑн,
Пуҫӑма усма памастӑн.

Кама кӑна пулӑшмастӑн!
Мӗнле кӑна ыр тумастӑн!
Ҫынлӑхна та ҫухатмастӑн,
Хамӑртан кулма памастӑн,
Пирӗн йӑх ятне ямастӑн.

Эсӗ, чӑнах, чӑн арҫынах.
Тур пулӑшах, ан куҫӑхах.

Римма ПЕТРОВА.

● *Статья*

# ЧĂВАШ ÇЫННИ ХĂЙĔН ПУРНĂÇĔНЧЕ ЙĔР ХĂВАРМА ПУЛТАРАТЬ-И?

Ирĕкри пурнăçра «Чăваш кĕнекине ĕне çисе янă» тесе каланине ентешсенчен анчах мар, урăх халăх çыннинчен те илтме тиврĕ. Те хăйĕн пысăк ăс-тăнне кăтартасшăн пулчĕ вăл, те ку таранччен вулама, çырма вĕреннĕ-ши эсир, тесшĕнччĕ. Калаçу пулмарĕ. Мĕнле пулсан та ку сăмахсем – чăн чăваш ачин чунне кӳрентерекен сăмахсем. Мĕншĕн-ха вырăссем тата пирĕн хисеплĕ ватă çынсем çакăн пек каланă?

Чăваш халăх историйĕ çинчен çырнă кĕнекесем пулман пирки каланă теççĕ çав сăмахсене. Паян куна илсен те хамăр халăх историйĕ çинчен тĕплĕн çырнă кĕнекесем пурри çинчен калама пултараймастпăр. Çакăн пĕр сăлтавĕ – тĕнче историйĕнче чăваш халăхĕ хăварнă йĕре шыраса тупма йывăр пулни. Тен, йĕрĕсем нумаях пулман та, сахал упранса юлнă пулас. XVIII-XIX-мĕш ĕмĕрсенче çĕр таран шыраса тупнă çырулла виле юписем халăх историйĕн пĕр кĕске тапхăрĕ çинчен анчах каласа пама пултараççĕ.

Чăваш халăхĕ – вăрман халăхĕ, вăрмансенче те вăтанса-пытанса пурăннă, теççĕ. Турра ĕненни, пурнăçа хăйне май курни, вилнĕ çынна пытарас йăласем йывăççемпе, йывăçран тунă палăксемпе çыхăннă.

Манăн асăмрах, акă, пирĕн ялăн Кăнар шывĕ

çуменчи виççемеш масаре. Пысакклансах кайре вал. Юрать-ха ку масара йери-тавра карта тытса хутелене. Хаш-пер палакесем чултан е тимертен тунаскерсем. Тен, çакна пула каман та пулин ячĕ-шывĕ нумайлăха упранса юлĕ?

Пĕрремĕш масар çине асаннене пытарнăччĕ. Пур палăкĕ те унта йывăçран тунăскерсемччĕ. Паян çав вырăн çĕрпе танлашса ларнă, пĕр виле вырăнне те тупаймастăн кунта.

Иккĕмĕш масарĕнче темиçе вил тăпри анчах курăнса ларать. Вĕсем те паян-ыран курăнми пулаççĕ. Чул, гранит, мрамор материалсемпе усă курнă пулсан, тен, масарсем те çавăн пек хăвăрт çухалмастчĕç пулĕ. Ял халăхĕн йĕрĕ те упранса юлнă пулĕччĕ.

Йывăçпа ĕçлес йăла халĕ те халăх хушшинче шалта тытăнса-упранса тăрать пулас. Шупашкартан тухса Мускав еннелле каякан çул çинче Мадуров скульптор ăсталанă композици тăрать – чăвашсем лашасемпе Мускава каяççĕ. Ку палăка йăлтах йывăçран касса тунă терĕç. Çирĕп йывăç пулсан та, вăрах вăхăта пырать-ши ку композици?

Хĕвел анăç Кавказра пилĕк пин çул каялла пуян çынсене пытарма тунă дольменсене тупни çинчен нумайăшĕ илтнĕ е вуланă пулĕ-ха. Юлашки вăхăтра вĕсем çинчен вуншар кĕнеке пичетленсе тухрĕ.



Геленджик хули таврашĕнче вăтăр тоннăна çитекен чул плитасенчен тунă дольменсем 150-а яхăн упранса юлнă. Тĕнче ученăйĕсем



халĕ те тĕпчеççĕ вĕсене. Хăш халăх тунă çак чул çуртсене, мĕн тĕллевпе туса лартнă? Пĕр евĕрлĕ шухăш халиччен те çук-ха.

Чул çуртсен конструкцийĕсене экскурсипе Геленджик районĕнчи Маркотх тăвĕ çине çитсен пăхса тухрăм. Кунта 4 дольмен упранса юлнă. «Тор», «Хан», «Мая», «Нежность» ят панă вĕсене кунта пурăнакан халăх. Кашни дольмене 5 чул плитинчен пуçтарса лартнă – тĕнчен кашни енне пĕрер плита тăратса вырнаçтарнă, чи йывăр чулĕпе çуртне çӳлтен хупласа хунă. Кĕрсе тухма çумĕнчи чул плитара çаврака тăраллă шăтăк аснă.

Çак çуртсем 5 пин çул хушшинче сапаланса-арканса кайманни çӳлтен чи йывăр чул плита пусса тăнинчен кăна килмест. Çурт кĕтессинче чул плитасене картлашкасем тусах пĕр-пĕринпе çирĕплетсе вырнаçтарнă. Тата стена плитисене тӳп-тӳррĕн мар, кăштах пӳрт варрине тайăлтарса тăратнă. Кун пек конструкциллĕ çуртсем хăй тĕллĕн нихçан та арканса каяс çук.

Çавăн пек авал пурăннă халăх тем пысăкăш чулсене касса татса, якатса тата аякран сĕтĕрсе-турттарса килсе çĕклесе вырнаçтарма пултарни те тĕлĕнтерет ĕнтĕ пурне те.

Чăн малтанах «Тор» ятлă дольмен патне çитрĕмĕр. Сăрт тăрринче ларать вăл. Ăна пирĕн эрă пуçланиччен 2 пин çул маларах туса лартнă. Ку чул çурт, унăн çумне сĕвенсе е алăпа тытса тăрсан, авалхи халăхăн ăс-тăнĕ, энергийĕ космос урлă килсе чунлă çынна ĕçĕсенче, пурнăçра ăнăçлă пулма пулăшать теççĕ.

Эпĕ те 4 пин çул каялла туса лартнă чул çурт çумне сĕвĕнсе тăтăм, çакăнта нумай çул хушши пуçтарăнса пынă вăй-хăвата, энергие туйса илме тăрăшрăм. Авалхи чăвашсен мĕнле те пулин палăкĕ тупăнсан унта та кайса сĕвĕнсе е ыталанса тăрăттăм.

Паллах, çĕр çинче пурăннă кашни халăх хăйĕн ăс-тăнне, вăйне пуçтарса дольменсем е пирамидăсем пуçтарса ăсталаса лартса йĕр хăварма пултарайман. Тен, халăх йĕрĕ кашни çын ĕçĕ-хĕлĕнчен те килет. Çын вара йывăр ĕç тума, çирĕп чулсем çинче çапса-шăтарса хăйĕн чĕлхипе виçĕ сăмах та пулин çырса хăварма пултаратех. Е, вăй çитерсен, кăмăл пулсан, ял-йыш, ял пурнăçĕ çинчен пĕр пĕчĕк кĕнеке те пулин пичетлесе кăларать.

Чăвашсем хушшинче кашни ял-хула, унта пурăнакан çынсем çинчен вуншар пин кĕнеке тухсан, вĕсене тем пек пысăк ĕне кĕтĕвĕ те çисе пĕтерейменĕ. Тен, ун чухне «Чăваш кĕнекине ĕне çисе янă» тенине те манса кайăпăр.

# МОЧК – МОСКОВСКОЕ ОБЩЕСТВО ЧУВАШСКОЙ КУЛЬТУРЫ

В деятельности первых лет МОЧК самое активное участие принимал и Г.А.Викторов.

Чувашское землячество в Москве существовало давно. Его в те годы возглавляли супруги Цаплины. Хорошей традицией была ежегодная встреча на Ваганьковском кладбище у могилы просветителя чувашского народа И.Я.Яковлева.

В 1989 году я и Владимир Петрович Кирюшкин, инженер-программист института им. Кур-чатова, побывали в Ульяновске и узнали о том, что там организовано Чувашское общество им. И.Я.Яковлева. Вернувшись в Москву в конце августа 1989 года, мы собрали инициативную группу в мастерской скульптора Алексея Петровича Майраслова по адресу ул. Кубанская, д. 16/2, рассмотрели вопрос об организации Московского общества чувашской культуры (МОЧК). Заседания инициативной группы всегда проходили по этому адресу. На наш взгляд, в этой мастерской должна висеть мемориальная доска с надписью «В мастерской известного чувашского скульптора А.П.Майраслова возродилось МОЧК».

Одним из активных членов инициативной группы, как уже отметили, был В.П.Кирюшкин. Благодаря его стараниям, был написан проект Устава и изданы первые номера журнала «Ниме».

Первое организационное собрание земляков

состоялось в начале декабря 1989 года в зале Дома литераторов, где был принят Устав общества и избрано правление. В состав правления вошли известные люди, дважды герой СССР космонавт Андриян Григорьевич Николаев, академик Геннадий Никандрович Волков; Алексей Николаевич Александров – помощник главного военного прокурора, Владимир Никифорович Абашев – доцент, Александр Петрович Ашмарин– главный инженер ВЧ, Фаина Михайловна Анисимова – кинорежиссер, Геннадий Николаевич Айги – поэт, Владимир Ильич Ильин – врач, Виталий Тимофеевич Караськин – инженер, Тимофей Степанович Семенов – инженер, Виталий Николаевич Якимов – д.э.н., профессор, ректор ИПК и другие.

В этот же день состоялось первое заседание правления, на котором А.Г.Николаев был избран почетным председателем правления, В.С.Пряников – председателем, Г.Н.Волков – заместителем председателя и В.Н.Якимов – заместителем председателя.

Я всей душой взялся за эту большую общественную работу и все свободное время отдавал ей. Пришлось отложить даже работу по защите подготовленной докторской диссертации. Самым первым и активным помощником по этой работе стала моя супруга Валентина Михайловна, которая вела всю переписку и регистрацию членов МОЧК. Наша квартира, находящаяся по адресу: г.Москва, ул. Ак.Капицы, д.30, корп.1, кв.209 стала первым офисом Московского общества чувашской культуры.

Первой значительной работой явилась официальная регистрация и открытие счета МОЧК. Параллельно с этой работой уже в январе 1990 года была открыта Чувашская воскресная школа по изучению родного языка, истории и культуры чувашского народа. Первой учительницей

по чувашскому языку стала Зоя Викторовна Алексеева, студентка пединститута. Уроки по истории и культуре проводили известные ученые и деятели культуры. Первый учебный год школа размещалась на Садовом кольце в помещении, предоставленном Виталием Тихоновичем Тимофеевым, зам. директора центра «Малая экономика».

Вскоре в работе МОЧК стал принимать активное участие Геннадий Александрович Викторов. Он осуществлял связь МОЧК с различными организациями и известными земляками, проживающими в столице Российской Федерации – Москве. По его инициативе были организованы встречи с Клавдией Васильевной Чапаевой, дочерью легендарного героя гражданской войны В.И.Чапаева, с чувашским поэтом Катай, с профессором А.С.Виш-няковым.

Г.Викторов организовал выступление на Московском радио, где вместе со мной рассказал о чувашской диаспоре Москвы.

Также Г.А.Викторов организовал конкурс стихов, посвященный юбилею известного чувашского поэта Г.Айги, проживающего в Москве. Победители кон-курса были приглашены в Москву для награждения.

В «Московской правде» Геннадий Александрович опубликовал статью «Мы – чуваши».

Он также опубликовал заметки, сообщения в газетах Чувашской Республики – «Хыпар», «Советская Чувашия», «Чăваш ен» о делах МОЧК.

Следующей большой работой я считаю организацию чувашского хора. В этой работе неоценимую помощь оказала Галина Александровна Никитина - хормейстер, высокий профессионал своего дела. Чувашский хор в Москве существовал еще в 50-е годы. Удивительно то, что в 1991 году в хор

пришли ветераны Георгий Андреевич и Галина Николаевна Ивановы, которые 40 лет тому назад пели в прежнем хоре. Из среднего поколения активное участие принимали Елизавета Николаевна Сармандейкина и Нина Сергеевна Осипова. Первый концерт Чувашского хора в Москве состоялся накануне женского праздника в 1991 году в помещении филиала библиотеки им. Некрасова в Сокольниках.

В мае 1991 года состоялось открытие чувашской библиотеки при МОЧК. Фонд этой библиотеки был собран безвозмездно членами общества. На открытие приехал Министр культуры ЧР Герольд Михайлович Алексеев. Он передал нашей библиотеке 300 экземпляров чувашских книг от Национальной библиотеки ЧР. Большую помощь при организации библиотеки МОЧК оказал Г.А.Викторов.

При обществе было организовано малое предприятие «Ниме», которым успешно руководил пол-ковник запаса Петр Алексеевич Чернов.

Неизгладимые впечатления оставили многочисленные праздники, проводимые Московским обществом чувашской культуры, – «Мы – чуваши», «Сурхури», «Акатуй», на которые собирались около 2 тыс. московских чуваш и земляки из других регионов. На эти праздники мы приглашали известных артистов и эстрадные группы из Чувашской Республики. Так, перед членами общества выступали артисты фольклорного ансамбля «Уяв», эстрадного ансамбля «Çавал», Чувашского государственного ансамбля песни и танца, Чувашского академического драматического театра им. К.В.Иванова, Молодежного театра им. М.Сеспеля, Театра сатиры и юмора, коллективы художественной самодеятельности Янтиковского района, с.Калинино Вурнарского

района, школы №50 г. Чебоксары и др. При организации этих праздников большую спонсорскую помощь оказал наш земляк Петр Николаевич Муллин. Им были оплачены расходы на дорогу, размещение и питание гостей.

Московским обществом чувашской культуры были продолжены традиционные встречи у могилы И.Я.Яковлева. После возложения венков и цветов на могилу просветителя своими воспоминаниями о нем выступил художник Иван Васильевич Дмитриев, лично знавший Ивана Яковлевича Яковлева.

В 1991-1993 годы при библиотеке им. В.И.Ленина были проведены ежегодные яковлевские чтения, на которые приезжали известные писатели и деятели культуры Чувашской Республики.

Московское общество чувашской культуры приняло активное участие в организации заседания Чувашского национального конгресса и других крупных меро-приятий, проводимых Чувашской Республикой в Москве.

В 1994 году меня пригласили в Чувашский государственный университет им. И.Н.Ульянова для организации учебного процесса по новым специальностям, новой кафедры радиотехники и радиотехнических систем и нового факультета радиотехники и электроники. Я принял предложение. Признаюсь, нелегко было расстаться с активистами Московского общества чувашской культуры, которые за годы совместной работы стали не просто коллегами, но и, можно сказать, близкими соратниками в деле сохранения и развития национальных традиций.

***Виссарион ПРЯНИКОВ,***
***первый председатель правления МОЧК,***
***доктор технических наук,***
***профессор.***

# ТĂВАН ЕН ХĂЙ ПАТНЕ ТУРТАТЬ

Çакăн пек ăнсăртран тĕл пулса çывăхланасса шутламан та: ĕç пÿлĕмне кĕрнеклĕ арçын кĕрсе тăчĕ те аллăма çирĕппĕн чăмăртаса: «Хаçат хастарĕсене Мускав чăвашĕсенчен хĕрÿллĕ салам», - терĕ, хăйĕнпе кĕскен паллаштарчĕ. Хам хĕсметре пулнăран, вăл ахаль костюмпа пулин те, чăннипех çар çынни пулнине тÿрех туйса илтĕм. Йăнăшмарăм: умра – Г.А.Викторов подполковник. Сăмах çумне сăмах: ентеш отпускра пушă вăхăт тупăннипе усă курса тăван тăрăха çитсе килме тĕв тунă. Ял историйĕпе кăсăкланать иккен, ун çинчен уйрăм кĕнеке çырса кăларасшăн. Ырă пуçарура май пур таран пулăшма пултăм...

Геннадий Александрович 1951 çулта Шупашкар районĕнчи Мăн Марка ялĕнче çуралнă. Ишекри вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Мускав экономикăпа статистика институчĕ пысăк тавра курăмлă чăваш ачине хаваспах студентсен ретне йышăннă. Тепĕр пилĕк çултан хĕрлĕ дипломлă çамрăк специалист лейтенант званийĕпе инçетри Камчаткăна тухса кайнă. Инженер-программист хăйĕн çар тивĕçне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçланă. Хăй калашле, «нихăçан та чăваш ятне яман». Каярахпа, Мускав облаçĕнчи Голицыно-2 хулана куçса килсен, космос аппарачĕсен управленийĕн центрĕнче наука сотрудникĕнче, аслă инженер-сăнавçăра пенсие тухиччене тăрăшнă.

– Çакăнта, пĕлетĕр-и, тăван ялти шкулта вĕреннĕ тапхăрта район хаçачĕпе тытнă туслă çыхăну питĕ пулăшрĕ, – аса илет Геннадий Александрович ун чухнехине. – 6-мĕш классем кăнтăртан çунатлă туссем вĕçсе килес умĕн йĕркеленĕ мероприяти çинчен «Кайăк кунне ирттерчĕç» ятпа заметка ăсатрăм редакцие. Пĕрремĕш утăм ăнăçлах пулмарĕ, анчах кӳренмерĕм. Каялла янă хуравăн темиçе сăмахĕ яланах асра юлчĕ: «...Çыхăнăва татас марччĕ». Вĕсем хистерĕç те мана хаçатсен штатра тăман корреспонденчĕн «лавне» кӳлĕнме...

Çар службинче кăна мар маттур пулнă ентеш. Унăн тĕрлĕ темăпа çырнă материалĕсем центрти тата ют çĕршывсенчи хаçат-журналта тăтăш пичетленнĕ. Мускав çар округĕн «Красный воин» хаçатĕнче, Çар министерствин «Техника и вооружение» журналĕнче 30-а яхăн наука статйи, 120 рационализатор сĕнĕвĕ кун çути курнă. «Техника и вооружение» журнал валли нимĕçле, пăлхарла куçарнă 10 статйи, сăмахран, çак çĕршывсенчи пичет кăларăмĕсенче вырăн тупнă.

-Тăван тăрăх, ял-йыш, çывăх çыннăмăрсем, шкул, пĕрле вĕреннĕ тантăшсем, хамăра пурнăçăн анлă çулĕ çине тухма пулăшнă учительсем яланах аса килеççĕ. Кăçал Ишекри вăтам шкулăн 160 çулхи юбилей каçне хутшăнасшăн, - пĕлтерчĕ хăйĕн шухăшне Г.А.Викторов.

***Юрий ЛИСТОПАД.***

***/«Хыпар». Кăрлач, 14. 2004 çул/.***

## Ан ӳкĕнĕр!

*/Геннадие - харсăр чăваш арне/*

Ан ӳкĕнĕр пĕччен юлсассăн,
Ан ӳкĕнĕр тăван нумай пулсан.
Ан ӳкĕнĕр туссем çумра тăрсассăн,
Ан ӳкĕнĕр пушшех те тусăр çук пулсан.

Ан ӳкĕнĕр сиртен кулсассăн,
Ан ӳкĕнĕр шеллев чуна çурсан.
Ан ӳкĕнĕр килпетсĕр ĕç тусассăн,
Ан ӳкĕнĕр чĕре тарăхупа тулсан.

Ан ӳкĕнĕр илем курсассăн,
Ан ӳкĕнĕр ăна сиртен тунсан.
Ан ӳкĕнĕр илемсĕр, тен, пулсассăн,
Ан ӳкĕнĕр ĕненнĕ юлташу сутсан.

Ан ӳкĕнĕр савни кайсассăн,
Ан ӳкĕнĕр вăл тепринпе юлсан.
Ан ӳкĕнĕр вăлах пуян пулсассăн,
Ан ӳкĕнĕр çӳлтен, тен, сĕмсĕррĕн сурсан.

Ан ӳкĕнĕр пит, çӳç шурсассăн,
Ан ӳкĕнĕр куçран куççуль юхсан.
Ан ӳкĕнĕр телей çукрах пулсассăн,
Ан ӳкĕнĕр теприн хавас сăнне курсан.

Ан ӳкĕнĕр! Кашниййĕн хăйĕн пурнăç.
Ан ӳкĕнĕр! Кашниййĕн пур илем.
Ан ӳкĕнĕр! Кашниййĕн хăйĕн тивĕç.
Ан ӳкĕнĕр! Кашниййĕн пур элем.

**Лидия ФИЛИППОВА**

# Фотожизнь Геннадия Викторова



**Мать - Викторова Анастасия Яковлевна.**



**Отец- Викторов Александр Викторович.**



**Лиза, Коля, Гена в детстве.**



**Мама с дочкой Лизой и сыном Геной.**



Коля, Лиза, Лида, Гена в детстве.



Гена, Галя, Лиза, Лида, Коля в молодости.



Я (слева - четвертый) с отцом, матерью, родственниками и соседями.



Тетя Соня (слева) с дочкой Ириной и моей сестрой Лизой.



Мать и отец (в середине).



8 класс Анаткас-Маргинской восьмилетней школы. Я - справа третий (сижу). Классный руководитель А.Козлов. 1966 год.



10 «В» класс. Выпускники Ишакской СОШ. 1968 год.

Сидят (слева-направо): Л.Константинова, Р.Сергеева, Р.Николаева, З.Савельева, Е.Александрова.

Стоят (слева-направо): Ю.Гаврилов, А.Александров, С.Васильев, В.Донской, кл. руководитель, учитель математики Н.Смелов, Ю.Аверкиев, Г.Викторов, В.Захаров.



Подготовка к празднованию юбилея Ишакской СОШ. Директор Ишакской СОШ Г.Соловьева и Г.Викторов. Август 2003 года.



Выпускники 1968 года Ишакской СОШ встретились через 35 лет. Ишакской СОШ - 160 лет. (Р.Иванова, Г.Викторов, учительница физики Г.Степанова, Е.Александрова, Ю.Аверкиев, Р.Васильева, Р.Сергеева, Р.Николаева). 22 ноября 2003 года.



**Учитель русского языка Анаткас-Маргинской 8-летней школы А.Тимофеев (слева) со своими учениками: Р.Васильевой, Г.Викторовым, Г.Ивановым, Р.Ивановой, З.Петровой, Е.Александровой.**



**Ишакской СОШ - 160 лет. На переднем плане - Г.Викторов.**



**Выпускники Ишакской СОШ 1968 г. Встреча в день празднования 160-летия школы 22 ноября 2003 года.**

**Слева-направо: Г.Иванов, Ю.Аверкиев, Г.Викторов, Р.Николаева, Ю.Гаврилов, Р.Сергеева, Е.Александрова, глава администрации д. Анаткас-Марги А.Максимов, Р.Васильева, Л.Толстов.**



**Дежурный стрелок военизированной охраны на военной кафедре МЭСИ. 1969 год.**



**Студент МЭСИ Г.Викторов. 1972 год.**



В строительном отряде в г. Норильск
во время учебы в МЭСИ. 1969 год.







**Военные сборы в г. Тамбов во время учебы в МЭСИ. 1972 год.**





**В гостях у друга В.Филисова под г. Кострома. 1970-е годы.**





**В.Филисов в гостях в д. Анаткас-Марги с моими сестрами. 1970-е годы.**



**Сборная по лыжам войсковой части 14086. Камчатка. 1974 год.**



**В минуты отдыха. 2003 год.**



На сборах по военной подготовке в Тамбовском артиллерийско-техническом училище. Рядовой Г.Викторов. Июль, 1972 г.



Старший лейтенант Г.Викторов. Петропавловск-Камчатский, 35. 1975 г.



Центр подготовки космонавтов в г. Королев. Посещение Музея космонавтики. 1987 год.



**«Сыны Отечества» на пути в Чебоксары. Встреча на въезде в Чувашию. 4 сентября 2003 года.**



**«Сыны Отечества» на пути в Чебоксары в Нижегородской области на привале. В центре - Г.Викторов. 4 сентября 2003 года.**



«Сыны Отечества» в Чебоксарах. У Вечного огня в Чебоксарах. Полковник Н.М.Сольнов (д. Тойдеряки) и подполковник Г.А.Викторов (д.Анаткас-Марги Чебоксарского района). 5 сентября 2003 года.



«Сыны Отечества» в Чебоксарах. Возложение цветов к Вечному огню. 5 сентября 2003 года.



«Сыны Отечества». Посещение музея в Шоршелах - на родине космонавта Андрияна Николаева. Подполковник Викторов с генералом П.Ермолаевым. 5 сентября 2003 года.



«Сыны Отечества» внимательно слушают рассказ о г.Чебоксары. 5 сентября 2003 года.



«Сыны Отечества» в Чебоксарах у здания МВД ЧР. 5 сентября 2003 года.



Подполковник Г.Викторов в Москве с земляками 18 февраля 2004 года.



**Выпускники МЭСИ встретились через 30 лет. Моя родная группа «Дневная механизация - 502» (А.Шолкина, И.Верховинская, Г.Викторов, А.Чистова). 1 марта 2003 года.**



**Встреча выпускников Московского экономико-статистического института (выпуск 1973 г.). 25 апреля 2003 года.**



Г.Викторов со своим тренером по лыжной подготовке А.Лежневым. 2003 год.



Встреча выпускников МЭСИ. 2003 год.



Глава г. Краснознаменск Московской области А. Николаев и Г.Викторов на празднике Акатуй - 2004 в Москве. 23 мая 2004 года.



**Город Серпухов. Подрядчик - ООО «Атилл». Генеральный директор Г.Викторов у дома, на котором организация проводила строительную работу. 2003 год.**



**Сдан еще один жилой дом.
Город Усово Московской области. 2004 год.**



**Встреча московских чувашей с академиком Г.Волковым (слева - третий), А.Николаевым (слева - пятый) и Е.Лисиной (справа - четвертая).**



**Г.Викторов в гостях у академика Г.Волкова.**




**После подведения итогов Акатуя-2003 в Москве у депутата Госдумы РФ А.Г.Аксакова. На заднем плане справа - Г.Викторов. 5 июня 2003 года.**



**С земляками в г. Краснознаменск. 2003 год.**



**Акатуй - 2003. Слева-направо: А.Григорьев - Полномочный представитель ЧР при Президенте РФ, З.Воронова - предприниматель из Чебоксар и Г.Викторов.**



**Г.Викторов с землячкой Людмилой на Акатуе - 2003.**



**На Акатуе - 2004. Г.Викторов с А.Николаевым, А.Аксаковым и другими земляками. 23 мая 2004 года.**



**Акатуй - 2004. С земляками. 23 мая 2004 года.**



Известный чувашский писатель Анатолий Кибеч и Г.Викторов встретилсь на Акатуе-2004. 23 мая 2004 года.



Заслуженный работник культуры ЧР Т.Шаркова вручает Г.Викторову набор открыток своих работ - чувашских вышивок. 11 мая 2004 года.



**У родного дома в д. Анаткас-Марги. 6 сентября 2003 года.**



**Три сестры: Анастасия (слева), Ирина и Соня.**



С родственниками.



На фотоснимке довоенных лет - жители д. Анаткас-Марги.
1 ряд. Слева третья - Анфиса Полытова, сестра матери.
2 ряд. Слева пятый - Яков Полытов, отец матери.
3 ряд. Слева седьмой - Николай Зайцев, брат моего отца.



Во время посадки картофеля в д. Анаткас-Марги. 2003 год.



С родственниками Р.Петровой и ее супругом В.Петровым.



Г. Викторов (первый ряд, справа) с ветеранами тыла и фронта Анаткас-Маргинского сельсовета Чебоксарского района. 9 мая 2004 года.



**Земля любит трудолюбивых. Анаткас-Марги. 2003 год.**



**Управлять сохой - истинно мужское занятие. 2003 год.**



**На берегу реки Унга расположилась д. Анаткас-Марги. 2003 год.**



**Вблизи дачного участка в Струнино на отдыхе. 1 июня 2003 года.**



**Г.Викторов с сыном Константином. 1991 год.**



**Сын К.Викторов - за компьютером. 2004 год.**



**На 80-летие матери собралась большая и дружная семья. 2 января 2004 года.**

## Тупмалли


Ступени жизни . . . . . . . . . . . . . . . . 3-4
Общественная работа . . . . . . . . . 5
Награды Г.А.Викторова . . . . . . . . . 6-8
Ачалăх . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9-12
Мăн Марка шкулĕнче . . . . . . . . . . 13-16
Ишек шкулĕнче . . . . . . . . . . . . . . . 17-20
Благодарность . . . . . . . . . . . . . . . 21
Университет . . . . . . . . . . . . . . . . . 22-24
Мускавра . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 25
Студент пурнăçĕ . . . . . . . . . . . . . 26-30
Çар ĕçĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 31-35
Новая стезя . . . . . . . . . . . . . . . . . 36-37
Сыны Отечества . . . . . . . . . . . . . 38-42
Атте-анне тăванĕсене шырани . . . . . . 43-47
Атте тăванĕсене пăхса тухни . . . . . . 48-49
Асаттепе асанне ачисем . . . . . . . . 50-51
Анне тавращĕ . . . . . . . . . . . . . . . 52-56
Ял ячĕ пирки . . . . . . . . . . . . . . . . 57-59
Кола-тихха урамĕ . . . . . . . . . . . . 60-61
Ункă хĕррипе киле утатăп . . . . . . . 62-65
243 çул каялла . . . . . . . . . . . . . . . 66
Симĕс çырла /курса çӳрени/ . . . . . . . . 67-69
Вельд /куçару/ . . . . . . . . . . . . . . . 70-73
Эпиграммăсем . . . . . . . . . . . . . . . 74-76
Парăм . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 77
Тунсăх . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 78
Васкатăп . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 79
Тĕлĕнтеретĕн . . . . . . . . . . . . . . . . 80
Чăваш çынни хăй пурнăçĕнче
йĕр хăварма пултарать-и? . . . . . . . . 81-84
МОЧК – Московское общество
чувашской культуры . . . . . . . . . . . . 85-89
Тăван ен хăй патне туртать . . . . . . . 90-91
Ан ӳкĕнĕр! . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 92
Фотожизнь Геннадия Викторова . . . . . 93-126

**Геннадий Викторов**

# Я пришел!

*На чувашском и русском языках*

Редактор Л.И.Филиппова
Корректор Н.Ю.Соловьева
Верстка Н.Ю.Трофимовой

Подписано в печать 10.06.2004. Формат 60х84/16.
Бумага писчая. Печать офсетная.
Гарнитура «Times New Roman».
Усл. печ. л. 11,62. Уч.-изд. л. 8,0.
Тираж 500. Заказ 359.

Издательство Чувашского госуниверситета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский пр., 15

20=00



✓ Геннадий Александрович Викторов родился 2 февраля 1951 года в деревне Анаткас-Марги Чебоксарского района Чувашской АССР.

✓ После Анаткас-Маргинской восьмилетней школы в 1968 году окончил Ишакскую среднюю школу.

✓ С 1968 по 1973 годы учился в Московском экономико-статистическом институте. Инженер-экономист. В 1973 году был призван в ряды Вооруженных Сил СССР. С 1973 по 1979 годы проходил службу на Камчатке на наземном измерительном пункте Главного управления космических средств в должностях инженера-программиста и старшего инженера.

✓ В 1979 году для прохождения дальнейшей службы был переведен в один из Центров управления космическими аппаратами в Подмосковье.

✓ Получил в соавторстве 11 авторских свидетельств на изобретения, три из которых нашли применение в войсковой практике. Опубликовал 50 научных работ. Внедрил 110 рационализаторских предложений.

✓ Офицер Г.Викторов Указами Президиума Верховного Совета СССР от 28 января 1978 года и 28 января 1988 года был награжден юбилейными медалями «60 лет Вооруженным Силам СССР» и «70 лет Вооруженным Силам СССР», а также награжден медалями «За безупречную службу» III и II степеней. 3 апреля 1996 года уволен из рядов Вооруженных Сил.

✓ Принимает активное участие в общественной жизни чувашской диаспоры в г. Москва.